[illegible] им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Апрель
25
ШĂМАТКУН
№ 82 (8991)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви таврa тата тачăрах пĕтĕçĕр, хамăрăн вăйсемпе творчествăлла пултарулăха хамăр çĕршывра коммунизм тăвас аслă ĕçе мобилизацилер!

(КПСС Центральнăй Комитечĕ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланисенчен).

Парти вĕренĕвĕн çулне ăнăçлă вĕçлер

Партин XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ çапла кăтартса пачĕ:

«Парти членĕсен тата парти членĕн кандидачĕсен политикăлла пĕлĕвĕсене ӳстерни вăл—вĕсен пурнăçра пур ĕçре те малта пырас рольне вăйлатма, парти массисен активлăхне малалла ӳстерме тата парти организацийĕсен ĕçне лайăхлатма чи кирлĕ услови пулса тăрать... Парти организацийĕсен парти членĕсемпе тата парти членĕн кандидачĕсемпе вĕсен идейăлла шайне ӳстерес тĕлĕшпе яланах ĕçлемелле, вĕсене марксизма-ленинизма вĕрентмелле, вĕсенчен политикăна лайăх пĕлекен, ăнлануллă коммунистсем ӳстерсе çитĕнтермелле».

Республикăри парти организацийĕсем, партин Центральнăй Комитечĕ панă кăтартусене пурнăçласа, И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçне, вăл партин XIX-мĕш съезчĕн юлашки ларăвĕнче каланă историлле сăмаха тата съезд решенийĕсемпе материалĕсене тарăннăн вĕренес тата анлăн ăнлантарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç.

Партин XIX-мĕш съезчĕ хыççăн республикăра тата Шупашкар хулинче парти вĕренĕвĕн системинче кружоксемпе политшкулсен хисепĕ чылай ӳсрĕ. Парти вĕренĕвне партире тăманнисене 22.782 çынна хутшăнтарнă.

Парти организацийĕсем пропаганда ĕçне ертсе пырассине лайăхлатрĕç. Акă КПСС Калинино райкомĕ коммунистсем хушшинче марксистла-ленинла теорие вĕренес ĕç мĕнле пыни çинчен бюро ларăвĕсенче, пленумсенче, парти активĕн пухăвĕсенче тăтăшах сӳтсе явать, районта парти вĕренĕвне кулленех ертсе пырать.

Çавăнпа пĕрлех коммунистсене идейăлла-политикăлла воспитани парас енĕпе парти организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Партин хăшпĕр комитечĕсем парти вĕренĕвне çав çавах çиелтен ертсе пыраççĕ-ха, занятисен идейăлла содержанийĕпе сахал интересленеççĕ, коммунистсем И. В. Сталинăн ĕçне тата XIX-мĕш съезд материалĕсене мĕнле вĕреннине тăтăшах тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Кадрсене марксистла-ленинла пĕлӳ парас ĕçе партин Муркаш тата Хĕрлĕ Чутай райкомĕсем çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. КПСС райкомĕсем тата вĕсен пĕрремĕш секретарĕсем Логиновпа Филиппов юлташсем парти организацийĕсен идеологилле ĕçне хака хумаççĕ. Коммунистсене политикăна вĕрентес ыйтусене райкомăн бюровĕнче тата пленумĕсенче сайра хутра кăна сӳтсе яваççĕ. Ку райкомсем пропагандистсен кадрĕсене начар суйласа илеççĕ тата çителĕксĕр воспитани параççĕ. Çав районсенчи нумай парторганизацисенче кружоксемпе политшкулсен занятийĕсем сӳрĕккĕн иртеççĕ. Занятисене ирттермен тата вĕсене урăх кунсене куçарнă фактсем сахал мар пулнă. Хăшпĕр пропагандистсем, вĕсене кура вĕренекенсем те, занятисене хатĕрленмесĕр пыраççĕ. Тĕрĕслесе тăманнине пула, партипе хуçалăх руководителĕсем нумайăшĕ хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене ӳстермеççĕ.

Уйрăм пропагандистсем теорие вĕрентессине коммунизм обществи тăвас практикăлла задачăсемпе начар çыхăнтараççĕ, совет обществи тата совет государстви стройĕ çĕрсе пыракан капитализм стройĕнчен малта тăнине çителĕксĕр палăртаççĕ, социализмăн экономикăлла тĕп законĕ пурнăça кĕрсе пынине пурне те ăнланмалла тĕслĕхсемпе кăтартса памаççĕ.

Лекцисенче, кружоксемпе семинарсен занятийĕсенче пулакан йăнăшсемпе çитменлĕхсен тĕп сăлтавĕ пропагандистсем теори тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр хатĕрленнине пулса тăрать. Парти обкомĕ парти комитечĕсене пропагандистсен кадрĕсене суйласа илес тата воспитани парас ĕçе татăкланах лайăхлатма кирлине асăрхаттарчĕ. Районсенчи пулакан семинарсенче марксистла-ленинла теорие, И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçне тĕплĕн вĕренме пропагандистсем валли мĕн кирлине пурне те туса пама хушрĕ.

Апла пулин те пропагандистсемпе ĕçлессине партин хăшпĕр комитечĕсем тивĕçлипе хакламаççĕ. Куславкка райкомĕ парти историне вĕренмелли кружоксене тата политшкулсене ертсе пыракансен семинарĕсене уйрăммăн ирттерес вырăнне пĕрле ирттерме тытăннă. Шăмăршă тата Чурачăк районĕсенче семинарсене пропагандистсем пурте çӳремеççĕ.

Парти вĕренĕвĕн системинче вĕренӳ çулĕ пĕтесси çывхарса килет: ялсенче май уйăхĕн вĕçĕнче, хуласенче — июнь уйăхĕнче вĕçленмелле. Кашни парторганизацин идейăлла пурнăçĕнче ку пысăк событи пулса тăрать. Парти комитечĕсен парти вĕренĕвĕн системинчи çитменлĕхсене пĕтерме, вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлеме кирлĕ ĕçсене тăвас пулать. Вĕренӳ çулне вĕçлеме хатĕрленес ĕçре пропагандистсен кадрĕсене пулăшни кирлĕ. Итоглă занятисем ирттерни кадрсене парти историйĕпе теорие, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине вĕрентес ĕçе малалла лайăхлатма пулăшмалла.

Вĕренӳ программисем кашни политшкулта, кружокра тата семинарта мĕнле пурнăçланса пынине парти комитечĕсен тĕплĕн пăхса тухас пулать. Итоглă занятисем ирттермелли сроксене палăртса тухмалла. Уй-хир ĕçĕсем пуçланчĕç тесе, коммунистсен политикăлла вĕренĕвне вăйсăрлатма юрамасть. Ку ĕçре васкани, занятисене хупса ирттерни, çавна май вĕренĕвĕн идейăлла шайне чакарни пулмалла мар. Программăри материала кăçал вĕренсе пĕтерме май килмесен, ăна çитес çулта вĕренмелле.

Вĕренекенсен пĕлĕвне палăртма тата вĕреннĕ материала çирĕплетсе хăварма кашни политшкулпа кружокра ик-виççĕ итоглă заняти ирттерес пулать. Çав занятисенче пропагандистсен юлташла калаçу меслечĕпе анлăн усă курмалла. Унта вĕренӳ çулĕ тăршшинче вĕреннĕ материала тĕп ыйтусем тăрăх аса илмелле. Итоглă занятисене экзаменсем пек ирттермелле мар.

Марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕреннĕ коммунистсемпе теорилле калаçусем ирттерес пулать. Каçхи партшкулсемпе марксизм-ленинизм университечĕсенче, вĕренӳ планĕпе килĕштерсе, зачетсемпе экзаменсем ирттермелле.

Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен семинарсенче пропагандистсене итоглă занятисене ирттермелли меслетсемпе тĕплĕн паллаштарни кирлĕ. Консультантсене теорилле калаçусем ирттермелли меслетсемпе лайăх паллаштармалла. Итоглă занятие ирттерме хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен пропагандистсемпе консультантсен отчечĕсене парти пухăвĕсенче сӳтсе явас пулать.

Парти вĕренĕвĕн итогĕсем çинчен парти организацийĕсен пухăвĕсенче тата пленумсенче сӳтсе явмалла. Кашни коммунистăн малашне политикăна мĕнле формăпа вĕренмеллине кăтартса хăварни кирлĕ. Парти вĕренĕвĕн пур сыпăкĕсенче те çĕнĕ вĕренӳ çулне тĕплĕн хатĕрленме кирлĕ ĕçсене тумалла. Штатра тăман пропагандистсен теорилле тата методикăлла пĕлĕвĕсене çуллахи вăхăтра ӳстерессине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать.

Çак ĕçсенче пуринче те парти комитечĕсен библиотекисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем марксистла-ленинла теорие вĕренекен коммунистсене куллен пулăшса пыма тивĕçлĕ. Вĕсен квалификациллĕ лекцисем ирттермелле, ушкăнпа тата уйрăммăн консультацисем парассине йĕркелемелле, библиографи ĕçне лайăхлатмалла.

Вĕренӳ çулне ăнăçлă вĕçлесси—парти организацийĕсен питĕ пысăк задачи. Партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе решенийĕсене, И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçне пур коммунистсем те тарăн вĕренни коммунизм строительствинче, пиллĕкмĕш сталинла пилĕкçуллăха пурнăçа кĕртессишĕн пыракан кĕрешӳре çĕнĕ ӳсĕмсемпе çĕнтерӳсем тума май парать.

Мускав ячĕпе тăракан канал çинче навигаци уçăлнă

Апрелĕн 23-мĕшĕнче Мускаври Северный шыв вокзалĕнчен «Иосиф Сталин» теплоход çул çине тухнă. Вăл столицăран Молотов хулине каять.

Канал çинче вунçиччĕмĕш навигаци пуçланнă. Мускавран Молотов хулине тата Молотов хулинчен Мускава, «Иосиф Сталин» теплоходсăр пуçне, «Михаил Калинин» тата «Клим Ворошилов» теплоходсем, «Советская республика», «Н. В. Гоголь» тата ытти пăрахутсем те çӳреççĕ.

Апрелĕн 24-мĕшĕнче Молотовран Мускава киле «В. Г. Белинский» пăрахут тухнă. (ТАСС).

МЕХАНИЗАТОРСЕМ КОЛХОЗСЕНЕ ПĔВЕСЕМ ТУСА ПАРАÇÇĔ

Львов облаçĕнчи колхозсенче пĕвесемпе шыв тăмалли вырăнсем тăвас ĕç сарăлса кайнă. Ку ĕçре колхозсене МТС-сен мелиораци отрячĕсем тата «Укрмелиоводстрой» трестăн строительствăпа монтаж конторĕсем пулăшаççĕ. Пĕвесем тунă çĕрте тракторсем, канав чавмалли машинăсем, скреперсем тата ытти машинăсем те иртнĕ çулхинчен 2,5 хут нумайрах ĕçлеççĕ.

Пилĕк çул каялла облаçри колхозсенче 58 пĕве çеç пулнă. Халĕ ĕнтĕ пĕвесем пилĕк хут нумайрах шутланаççĕ. Кăçал пĕвесемпе шыв тăмалли вырăнсем 50 тăваççĕ.

Çураки ĕçĕсене хăвăрт тата пысăк пахалăхпа тăвар!



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Çĕрпӳ МТС-ĕн трактористĕ В. П. Кузин «Новая жизнь» колхоз уйĕнче суха тăвать.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тăпрари нӳрре сыхласа хăварар

ЙĔПРЕÇ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Çумăрлă кунсенче юр часах ирĕлсе пĕтрĕ. Халĕ уяр çанталăк тăрать, çĕр час типсе пырать.

Çакăн пек условисенче колхозсен уй-хир ĕçĕсене питĕ хăвăрт туса ирттермелле. Кĕрхи çĕртме тунă вырăнсемпе кĕрхи тырăсен калчисене сӳрелесе тăпрара нӳрĕ сыхласа хăварассине уйрăмах хăвăрт туса ирттерни кирлĕ. Çак ĕçе тунинчен кĕрхи тырăсем тухăçлă пулассипе кăна мар, çурхи тырăсем ăнăçлă пуласси те килет.

Çурхи ĕçсене тума тытăннăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Анчах районти колхозсем çураки ĕçĕсене агротехникăлла лайăх срокра хăвăрт туса пыраççĕ теме çук-ха. Кĕрхи тырăсене удобренисем сапса парас ĕçе 1.400 гектар çинче кăна туса иртернĕ. Плана тултарма тата 600 гектар çинчи калчасене удобренисем сапса памалла. Çакăнпа пĕрлех, кĕрхи тырăсен калчисемпе кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене сӳрелес ĕçре чылай колхозсем юлса пыраççĕ.

Колхоз правленийĕсен, уй-хир бригадисен бригадирĕсен уй-хирти ĕçе лайăхрах организацилемелле, ĕç тухăçлăхне куллен хăпартса пымалла.

Районти «Большевик», «Искра», «Фронтовик», Димитров ячĕпе тăракан колхозсем çураки ĕçĕсене хăвăрт туса пыраççĕ. Ку колхозсен пур бригадисенче те тырă акаççĕ. Вĕсем апрелĕн 23-мĕшĕнче çурхи тырăсем 25-шер гектар акрĕç.

С. СТЕПАНОВ,
ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ.

Агиткультбригада колхозсенче

СĔРПӲ. КПСС райкомĕпе районти культурăна çутĕç пайĕ çураки вăхăтĕнче колхозсенче культурăлла ĕçе йĕркелесе пыма агиткультбригада тунă. Бригадăра 12 çын. Унта—районти культура çуртĕн работникĕсем, профтехшкул тата ытти учрежденисемпе организацисенче ĕçлекенсем.

Бригадăн куçса çӳрекен кино пур. ВЛКСМ райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ Васильева юлташ бригадăпа пĕрле çӳресе «Çуркуннехи уй-хир ĕçĕсене срокчен тата лайăх туса ирттерер», «Тĕнчери халăхсем миршĕн кĕрешни» темăсем тăрăх лекцисем вулать.

Художествăлла пултарулăх коллективĕн членĕсем Л. Ленчăн «Талант» ятлă пьесине лартаççĕ тата концерт кăтартаççĕ.

К. ЧУГУНОВ.

* * *

Ялкорсен рейчĕ

Агротехникăна пăсни пулмалла мар

Калинино районĕнчи пур колхозсенче те ака-суха ĕçĕсене туса пыраççĕ. Пысăк тухăçлă тырпулшăн çине тăрса кĕрешекен колхозсенче кашни сехетпе туллин усă кураççĕ, çурхи тырăсене хăвăрт тата пысăк пахалăхпа акса хăвараççĕ.

Çав вăхăтрах районта çĕрĕçне япăх тăвакан, ялхуçалăх культурисен агротехникине пăсса ĕçлекен, çапла вара çураки ĕçĕсенче брак тăвакансем те пур.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз суха тума апрелĕн 18-мĕшĕнче тухнă. Анчах та бригадăсем агротехникăна пăсса ĕçлеççĕ. 25 гектар сухаласа пăрахнăранпа 5—6 кун иртнĕ ĕнтĕ, анчах ăна çийĕнчех акман. Çапла туни тăпра нӳрĕкне сая яни, тырпул тухăçлăхне чакарни пулать.

Колхозăн виççĕ сеялка пур. Анчах, МТС акса парасси çине шанса, иккĕ сеялкине юсаса хатĕрлемен.

3-мĕш бригадăри сухаçăсем виççĕ гектар çĕре питĕ ăшăх сухаланă, шăйрăксем нумай хăварнă. Г. Артемьев сухаçă иккĕ касăллă плугпа сухалать. Плугăн малти тимĕрĕ тăпра ăшне 4 сантиметр кăна кĕрсе пырать. Суха тикĕс пулмасть, пĕр кассийĕ тарăн, тепĕр кассийĕ ăшăх пулса пырать. Ĕçе çакăн пек çиелтен туса пырсан, тырпул ăçтан тухăçлă пултăр-ха? Çавăн пекех Ю. Андреева сухаçă та 10 сантиметр тарăнăш кăна сухалать. Çавна бригадир П. Прокопьев юлташ курса тăрать, анчах тӳрлетмест.

Агротехникăна пăсса ĕçлекенсем 2-мĕш бригадăра та пур. Сухаçăсем ăшăх сухаланине бригадир Н. Лаврентьев юлташ плугсем юсавлă мар пулнипе витме пăхать. Анчах çуракине тĕплĕн хатĕрленесси камран килнĕ-ха?

Çураки ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ. Колхозниксем—хирте. Анчах колхозри парторганизаци колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне организацилемен.

Хăшпĕр колхозсенче вăрлăха алăпа акаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Т. Ильин юлташ) сеялкăсене юсаман. Кунта 3 гектар çине сĕлĕ алăпа акнă.

Район центрĕнчи «Сталинец» колхозра, 1952 çулхи çуракинче агротехникăлла ĕçсене кирлĕ пек туса пыман пирки, тырпул тухăçлăхĕ начар пулнă. Колхоз руководителĕсем кăçал та çураки ĕçĕсене кирлĕ пек организацилесе пымаççĕ. Агротехникăна пăсса ĕçлеççĕ, ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешмеççĕ.

Çанталăк уяр тăрать пулсан та, апрелĕн 21-мĕшĕнче 2-мĕш бригадăра сухаçăсем ĕçе ирхине 10 сехетре тин тухнă, кăнтăрла иртсен 4 сехетрех ĕçрен таврăннă. Çак бригадăри А. Андреевпа Д. Павлова сухаçăсем çĕре 7—8 сантиметр тарăнăш çеç сухаланă, шăйрăксем нумай хăварнă.

Тăпра пур çĕрте те сухалама юрăхлă пулса çитнĕ. Анчах колхоз председателĕ В. Зайцев юлташ уй-хир ĕçĕсене чарса тăрать. Çавна пула колхозăн 1-мĕш бригади ака-суха ĕçĕсене тума халĕ те пуçăнман.

Çак колхозрах çурхи ĕçсене пысăк ответлăхпа туса пыракан бригадăсем те пур. Сăмахран, 3-мĕш бригадăри колхозниксем агротехникăна çирĕп пурнăçласа пыраççĕ. Сухаланă хыççăнах сӳрелеççĕ, çийĕнчех акса пыраççĕ. Г. Александровпа В. Михайлов сухаçăсем кашни кунах ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ.

Анчах та малта пыракансен ĕç опытне сарма тăрăшакан çук. Колхозниксен социализмла ăмăртăвне ертсе пымаççĕ, агитаторсем бригадăсенче ĕçлени курăнмасть. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларман.

Районта МТС çураки ĕçĕсене питĕ вăраххăн хутшăнса пырать. 7 трактор МТС карттишĕнчен те тухман-ха. Колхозсене кайнă бригадăсенчен çураки ĕçĕсене Кириллов юлташ ертсе пыракан бригада кăна хутшăннă.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат бригади: Б. ШОРНИКОВ,
П. КРАСНОВ,
Н. КУРЦОВ.

Пахча çимĕç калчисем ӳстереççĕ

ЕТĔРНЕ Тимирязев ячĕпе тăракан колхоз çулсеренех пахча çимĕçсем туса пысăк тупăш илет. Пахча çимĕç калчисене иртерех ӳстерме теплица тунă. Хальхи вăхăтра унта помидор калчи ӳстереççĕ. Калча питĕ лайăх ӳсет.

Теплицăсăр пуçне, колхозăн парник пысăк. Халĕ парнике теплицăри помидор калчисене куçарса лартаççĕ. Çитес кунсенчех купăста вăрри акаççĕ.

Пахча çимĕç бригади кăçал тĕрлĕрен çимĕç калчисене 50—60 пин таран ӳстерсе лартать.

М. ЗАХАРОВ.

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТУ

Агитаторсем калаçу ирттереççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, апрелĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). КПСС Центральнăй Комитечĕ 1953 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланисене районти ĕççыннисем хавхаланса кĕтсе илчĕç. Агитаторсем колхозсенче, учрежденисемпе предприятисенче калаçусем ирттереççĕ.

Шуршăлти Молотов ячĕпе тăракан колхозра парти чĕнсе каланисем тăрăх кашни бригадăрах калаçусем ирттереççĕ. Агитатор калаçăвне итленĕ хыççăн П. Иванов колхозник çапла каларĕ:

— Партипе правительство пирĕн колхозсене тĕреклетессишĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Парти ертсе пынипе эпир коммунизмăн çутă çуртне тăватпăр. Эпĕ суха тунă çĕрте нормăна кулленех ирттерсе тултарма сăмах паратăп

Колхоз апрелĕн 22-мĕшĕнче çуракине тухрĕ. Чылай колхозниксем суха тунă çĕрте кулленхи нормăна ирттерсе тултараççĕ.

Партин Центральнăй Комитечĕ чĕнсе калани çине ответлесе, «Правда», «Сĕнтĕршуç», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем те уй-хир ĕçĕсене хăвăртлатрĕç. Колхозсем клевер акмалли плана ирттерсе тултарнă. «Коммунизм» колхоз членĕсем кĕрхи калчасене мĕнпур лаптăк çинче удобренисем панă. Халĕ колхоз суха тăвать.

Районти предприятисен коллективĕсем, Май уявĕ умĕнхи стахановла вахтăна тăрса, хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. «Стройматериал» артель коллективĕ 4 уйăхри плана апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне 150 процент ытла тултарчĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕ чĕнсе каланипе хавхаланса, артельти рабочисем тата хастарлăрах ĕçлеççĕ. Ăмăртура хăма çуракан цех коллективĕ малта пырать. «Крестьянский кузнец» артель коллективĕ те лайăх ĕçлет. Кунта кулленхи нормăна тултарса пыман пĕр рабочи те çук. Бибков, Камбулов, Офицеров стахановецсем ĕç нормине 200-шер процент тултарса пыраççĕ.

М. ТИТОВ.

Панă сăмаха чыслăн пурнăçлаççĕ

Май уявĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнса, Шупашкарти электроаппаратура завочĕн коллективĕ пысăк обязательствăсем йышăнчĕ. Заводри цехсем, участоксем, бригадăсем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Çак кунсенче уйрăмах Геллер юлташ ертсе пыракан цех ăнăçлă ĕçлет: производство планне куллен ирттерсе тултарать, пур ĕçе те график тăрăх туса пырать. Княжевский юлташ ертсе пыракан цех та паха тĕслĕхсем кăтартать.

Стахановла вахтăна тăрса, нумай рабочисем тата тухăçлăрах ĕçлеме, продукци пахалăхне лайăхлатма, материалсем перекетлеме, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма пулăшакан сĕнӳсем пама пулчĕç. Рабочисен творчествăлла пултарулăхĕ ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем сахал мар. Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ В. Митрофанова юлташ ĕç нормине куллен 200 процентран кая мар тултарса пырать, пысăк пахалăхлă продукци туса кăларать.

Комсомолецсем Медведева, Савинов, Хохлова, Дергачев юлташсем тата ыттисем те ĕç нормине иккĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Иккĕмĕш сборочнăй цехри Авдеев юлташ тата тухăçлăрах ĕçлет: нормăна 250—280 процент таран тултарса пырать. Çакăн пек паха тĕслĕхсем заводра татах пур.

Завод коллективĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ 1953 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланине тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Центральнăй Комитет электростанцисемпе электропромышленноçри рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене халăх хуçалăхĕн ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме электроэнергипе электротехника оборудованийĕ татти-сыпписĕр парса тăма чĕнет. Çакă завод коллективне тата тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать.

М. БРИКЕР.

Планран ирттерсе продукци

Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче кашни работница ĕççыннисен аслă уявне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Партин Центральнăй Комитечĕ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланисем уяв умĕнхи ăмăртăва вăйлатма пулăшрĕç.

— Пирĕн юратнă тăван парти ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пыма, производство резервĕсемпе анлăрах усă курма тата продукци пахалăхне лайăхлатса унăн хăйне ларакан хакне йӳнетме чĕнет. Парти чĕнĕвне пурнăçлассишĕн ырми-канми ĕçлĕпĕр, — терĕ Ю. Сапожникова стахановка.

Вăл уяв умĕнхи ăмăртура ĕç тухăçлăхне, туса кăларакан продукци пахалăхне чылай ӳстерчĕ. Çак уйăхри задание вунă кун маларах ирттерсе тултарнă.

Çавăн пекех З. Кулабухова, М. Кладкова, Т. Винокурова тата ытти нумай работницăсем çак кунсенче сменăри задание чылай ирттерсе тултараççĕ, пĕрремĕш сортлă продукци ытларах туса кăлараççĕ.

— Уяв умĕнхи ăмăртăва тухса апрель уйăхĕнче Тăван çĕршыва планран ирттерсе 13 тонна çип пани, чĕртавар чылай перекетлени парти чĕнĕвне пурнăçлани пулĕ,—теççĕ рабочисемпе работницăсем.

Уяв умĕнхи социализмла ăмăртура малта пыракан работницăсемпе рабочисен ячĕсене комбинатри хисеп хăми çине çырса хунă. Вĕсем хушшинче Ю. Сапожникова, А. Николаева, Н. Еркина, А. Рыжова, Н. Сергеева, К. Турдакова тата ыттисем те пур.

Стахановла вахтăра

Чкаловски районĕнчи промкомбинат пĕрремĕш кварталти производство планне 133,9 процент тултарчĕ. Май уявĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, комбинат коллективĕ тата пысăкрах хастарлăхпа ĕçлет. Çĕвĕ çĕлекен цехри рабочисем урапа-çуна тăвакан тата атă-пушмак çĕлекен цехсенчи рабочисемпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ш. Сырав, Г. Ахметов, З. Шарафутдинова, М. Юмаева, А. Тямин мастерсем ĕç нормине куллен 130—140 процент тултарса пыраççĕ.

Инвалидсен «Гвардия» артелĕн членĕсем продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ.

В. КУЗНЕЦОВ.
К. ЮЛДАШЕВ.

Уйăхри плана ирттерсе тултарнă

СĔНТĔРВĂРРИ. Типографи коллективĕ ĕççыннисен уявне—Майăн 1-мĕшне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлет. Л. Филиппова, З. Малинина, Н. Егорова наборщицăсем, Л. Иванова печатница задание яланах ирттерсе пурнăçлаççĕ. Тăрăшса ĕçлесе коллектив уйăхри плана апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне 102,4 процент пурнăçларĕ, халĕ планран ирттерсе продукци парать.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Кунти типографи коллективĕ апрель уйăхĕнчи производство планне вунă кун малтан 110 процент тултарчĕ. Уяв умĕнхи ăмăртура Смирнова, Муздукова, Кудряшова тата Падиарова работницăсем лайăх ĕçлеççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче

Канаш районĕнчи ял Совечĕсем 1953 ҫул валли йышăннă социализмла обязательствăсем ҫинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ Канаш районĕнчи ял Совечĕсем 1953 ҫул валли йышăннă социализмла обязательствăсене ырланă.

Канаш районĕнчи ял Совечĕсем йышăннă социализмла обязательствăсене ял Совечĕсен сессийĕсенче сӳтсе явма хушнă. Райсовет исполкомĕсен социализмла ăмăрту договорĕсем тăвас тата социализмла обязательствăсем йышăнас ĕҫре ял Совечĕсене пулăшмалла.

Ял Совечĕсен социализмла ăмăртăвĕн итогĕсене кашни кварталтах пăхса тухмалла, унччен вĕсен ăмăртăвĕ мĕнле пынине тĕрĕслемелле, ăмăртакан ял Совечĕсем пĕр-пĕрин ĕҫĕсене тĕрĕслессине организацилемелле, ăмăрту итогĕсене ял Совечĕсен сессийĕсенче тата граждансен пухăвĕсенче сӳтсе явмалла.

Социализмла ăмăртура мала тухнă ял Совечĕсене премилеме Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куҫса ҫӳрекен пилĕк Хĕрлĕ ялавне малашнехи вăхăта та хăварнă. Кварталти итогсем тăрăх Хĕрлĕ ялав илме тивĕҫлĕ пулнисене 1.600-шер тенкĕ премни параҫҫĕ.

Куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ ялав илнĕ ял Совечĕн председателĕсене 400-шер тенкĕ, секретарĕсене 300-шер тенкĕ премни памалла тунă. Преми шучĕпе панă укҫан ытти пайĕ ял Совет аллине юлать, ҫав укҫапа ял Совет ĕҫне активлă хутшăннă ҫынсене премилеме, ҫавăн пекех тата ял Совечĕн социальнăй ĕҫĕсемпе культурăлла ĕҫĕсене пурнăҫлама усă курма пулать.

Ĕҫҫынни депутачĕсен район Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ кашни кварталта ĕҫре уйрăмах палăрнă ял Совечĕсене куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ ялав парасси ҫинчен постановлени йышăнать.

Канаш районĕнчи ял Совечĕсем 1953 ҫул валли илнĕ СОЦИАЛИЗМЛА ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ

(Ял Совет председателĕсен районти канашлăвĕнче йышăннă)

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕн историлле решенийĕсемпе, И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениалле произведенийĕпе тата вăл съездăн юлашки ларăвĕнче каланă сăмахĕпе хавхаланса, пирĕн ҫĕршыври ĕҫҫыннисем сталинла пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăх плана тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн питех те пысăк хастарлăхпа кĕрешеҫҫĕ.

ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăх планра пирĕн ҫĕршывăн халăх хуҫалăхне ҫĕнĕрен хăвăртлăн вăйлатса пыма, ĕҫҫыннисен материальнăй пурнăҫне лайăхлатма тата культурăллă шайне ӳстерме палăртнă. Сталинла пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăх плана пурнăҫа кĕртни пирĕн ҫĕршыв социализмран малалла коммунизм патне аталанса пырас ҫул ҫинче питĕ пысăк утăм туни пулать.

ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăх плана ăнăҫлă тултарас тĕлĕшпе ял Совечĕсен — государство влаҫĕн чи аялти сыпăкри органĕсен нумай ĕҫлемелле. Ял Совечĕсем партипе правительство решенийĕсене ҫирĕппĕн пурнăҫласа пыма, ĕҫҫынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйламалли кампани вăхăтĕнче суйлавҫăсем панă наказсене пурнăҫа кĕртме тивĕҫлĕ. Ял Совечĕсен сессисене ирттерес енĕпе Конституцисенче кăтартнă срока ҫирĕп тытса пымалла, сессисенче ялти хуҫалăхпа культура ĕҫĕсен пысăк ыйтăвĕсене тата суйлавҫăсен наказĕсене пурнăҫласси ҫинчен сӳтсе явмалла. Ял Совечĕсен исполкомĕсен ларăвĕсене йĕркеллĕ ирттермелле, ларусенче предприятисен, колхозсен, шкулсен, клубсен, медицина учрежденийĕсен ĕҫĕсене лайăхлатас енĕпе тăракан конкретлă ыйтусене татса парас пулать. Ял Совечĕсен хăйсен тата яланхи комиссисен ĕҫ формисемпе меслечĕсене лайăхлатса пымалла, ял Совечĕпе унăн яланхи комиссийĕсен ĕҫне совет активне анлă хутшăнтармалла. Комиссисем халăхăн ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕҫтерме ҫĕнĕ майсем тупас, партипе правительство решенийĕсем, советсен аслăрах органĕсем йышăннă решенисем тата вырăнти Совет хăй йышăннă решенисем мĕнле пурнăҫланса пынине тĕрĕслесе тăрассине вăйлатас енĕпе ĕҫлеччĕр.

Эпир, Канаш районĕнчи ял Совечĕсен председателĕсем, организацилле-массăлла ĕҫе пур майсемпе те вăйлатса, ялти ĕҫҫыннисен анлă массисене социализмла ăмăртăва хутшăнтарма тăрăшăпăр тата ҫакăн пек социализмла обязательствăсем йышăнатпăр:

1. 1953 ҫулта тĕштырăсен тухăҫлăхне ӳстерсе, районĕпе вăтам шутпа кашни гектартан 16 центнертан кая мар тĕштырă туса илмелле. Вăл шутра: тулă — 16 центнер, ыраш — 17 центнер, ҫĕрулми — 150 центнер, кантăр вăрри 5 центнер, кантăр сӳсĕ 5 центнер, нумай ҫул ӳсекен курăксен вăррине 1,2 центнер туса илмелле.

Пысăк тухăҫлă тырпул туса илмешкĕн уй-хирти пур ĕҫсене те кĕске срокра, агротехника вĕрентнĕ пек лайăх туса ирттермелле, тислĕк тата вырăнти ытти удобренисем нумай хатĕрлесе уй-хире кăлармалла, курăксем акнă пусă ҫаврăнăшĕсемпе выльăх апачĕ хатĕрлемелли пусă ҫаврăнăшĕсем туса ҫитермелле, уй-хире хӳтĕлемелли вăрман тăрăхĕсем тумалла тата ҫырма-ҫатрасене ишĕлесрен чарма йывăҫсем лартмалла, кӳлĕсемпе пĕвесем тумалла.

2. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе государство панă плана пур йышши выльăхсем енĕпе те тултармалла, вĕсен тухăҫлăхне чылай ӳстермелле. Районти колхозсенче кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.400 килограмран кая мар сĕт суса илмелле, кашни сурăхран 3 килограмран кая мар ҫăм илмелле, вăтам шутпа кашни чăхран 80 ҫăмарта илмелле.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата унăн тухăҫлăхне ӳстермелли плана ăнăҫлă тултарас тата ирттерсе тултарас шутпа ҫакăн пек ĕҫсем тумалла:

а) выльăх апачĕн ҫирĕп никĕсне тумалла, утă-улăм, сĕтеклĕ апат тата концентратсем ҫителĕклĕ хатĕрлемелле;

б) выльăх-чĕрлĕх витисене вăхăтра хатĕрлесе ҫитермелле, ҫĕнĕ витесем лартассине тата кивисене юсассине пурнăҫа кĕртмелле, выльăх-чĕрлĕх пăхнă ҫĕрте йывăр ĕҫсене механизацилессине анлă сармалла;

в) выльăх апачĕ тума акакан культурăсене акса тăвас ĕҫе малалла аталантарма, ҫарансемпе кĕтӳ ҫӳретмелли вырăнсене лайăхлатма тăрăшмалла, ҫапла майпа выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлемелли ҫирĕп никĕс тумалла.

3. Тырă хатĕрлемелли плана октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тултармалла, государствăна ҫĕрулми тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плансене ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, кашни колхоз, кашни хуҫалăх енĕпе, тултармалла.

4. Ялхуҫалăх артелĕн сталинла Уставне мĕнле пурнăҫласа пынине куллĕнех тĕрĕслесе тăмалла, колхоз ҫĕрĕсене салатса пĕтерме, колхоз пурлăхне ҫаратма, ялхуҫалăх артелĕн управлени ĕҫĕсен демократилле йĕркисене пăсма памалла мар, колхозсенче ĕҫкунĕсене усăсăр салатса пĕтерни, тырпула тата укҫа-тенке тĕрĕс мар валеҫни пулмалла мар.

5. Обществăлла хуҫалăхăн ҫĕнĕ отраслĕсене — сад, пахча ҫимĕҫ, пыл хуртĕ, пулă ĕрчетес ĕҫсене тата ытти отраслĕсене пур майсемпе те аталантармалла. Ҫулталăкра кашни колхозник вăтам шутпа 250 ĕҫкунĕнчен кая мар ĕҫлессе тăвассине пурнăҫа кĕртмелле.

6. Промышленность предприятийĕсемпе промысла коопераци артелĕсем пурте продукци туса кăлармалли плана ирттерсе тултарассине, заданире палăртнă пур йышши япаласене те лайăх туса кăларассине ĕҫе кĕртмелле.

7. Кĕркуннепе хĕлле вăрман касса хатĕрлемелли плана, ҫамрăксене ФЗО шкулĕсенче вĕренме ямалли, промышленноҫпа транспортра ĕҫлеме организованнăй йĕркепе рабочисем пухмалли, колхозниксене нумай ҫĕрлĕ районсене куҫармалли плансене ҫине тăрса пурнăҫласа пымалла.

8. Ҫул-йĕр тумалли плана срокчен пурнăҫламалла. Ҫул-йĕрпе кĕперсене яланах лайăх пăхса усрамалла. Ялсенчи благоустройство ĕҫне халăха анлă хутшăнтармалла. Ялсенче илем кӳрекен йывăҫсем нумайрах лартмалла, вĕсене пăхса ӳстерес ĕҫе кирлĕ пек йĕркелемелле.

9. Кашни ялпа тата ялти кашни магазин тавар ҫаврăнăшĕн планне тултартăр тесе тăрăшмалла. Магазинсемпе ларексенче ассортимент минимумĕнче кăтартнă таварсем пуррипе ҫуккине, вĕсенче культурăллăха, совет суту-илĕвĕн йĕркисене мĕнле пурнăҫласа пынине тĕрĕслесе тăмалла.

10. Ял Совечĕсен бюджечĕсене тупăшсем енĕпе те, расходсем енĕпе те лайăх пурнăҫламалла, бюджетра социальнăй ĕҫсемпе культурăллă ĕҫсем валли уйăрнă укҫана вăхăтра тата тăтăшах парса тăмалла.

Халăхран укҫа-тенкĕ пухмалли плана пур налогсемпе тӳлевсем енĕпе те кашни кварталтах тултарса пымалла, ҫавăн пекех тата заем укҫине хресченсенчен хăвăрт, заем ҫырăнма пуҫланă хыççăн пĕр уйăх хушшинче, пухса пĕтермелле.

11. Пур ачасене те обязательнăй йĕркепе ҫичĕ ҫул вĕрентмелли закона ҫирĕп пурнăҫласа пымалла. Вĕренӳ ҫулĕ тăршшĕнче ачасем шкула ҫӳреме пăрахни пулмалла мар. Тăлăх ачасене пулăшса, интернатсем организацилесе, вĕренекенсем валли лайăх услови туса памалла, пĕр класрах икĕ ҫул ларакансем ан пулчăр. Шкулсене ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулне вăхăтра хатĕрлесе ҫитермелле, ҫак ĕҫе общественноҫа анлă хутшăнтармалла. Ҫитес пилĕкҫуллăхра пурне те вăтам пĕлӳ парас ĕҫе тата политехникăлла вĕренĕве куҫмашкăн материально-техникăлла никĕс хатĕрлеме тытăнмалла.

12. Медицина учрежденийĕсен ĕҫне пур майсемпе те лайăхлатса пымалла. Халăх трахома чирĕпе чирлессине пĕтермелле, халăх хушшинче санитарипе профилактика ĕҫне анлă сармалла. Медицина учрежденийĕсем валли вутă ҫителĕклĕ хатĕрлемелле, инвентарь тата оборудовани илсе памалла. Медицина учрежденийĕсен ҫурчĕсене вăхăтра юсаттармалла.

13. Вулав ҫурчĕсен, библиотекăсен, клубсен ĕҫĕсене лайăхлатмалла. Халăх хушшинче обществăлла-политикăлла темăсемпе, ҫутҫанталăкпа наука ҫинчен докладсемпе лекцисем час-часах ирттермелле. Халăха кино кăтартас ĕҫе лайăхлатмалла. Художествăлла пултарулăх коллективĕсем тăвас ĕҫе анлă сармалла, вĕсен ĕҫне вăйлатмалла. Радиоузелсем тăвас тата радио кĕртес ĕҫсене пур майсемпе те сарса пымалла.

Эпир Чăваш АССР-ĕнчи ĕҫҫынни депутачĕсен пур ял Совечĕсемпе поселок Совечĕсене те социализмла ăмăртса ĕҫлессине анлă сарма, хуҫалăхпа культурăна аталантарас, хамăрăн Тăван ҫĕршывăн хăватне малалла тĕреклетсе пырас ĕҫре сталинла пиллĕкмĕш пилĕкҫуллăхăн виҫҫĕмĕш ҫулне ҫĕнĕ ҫитĕнӳсемпе паллă тума чĕнетпĕр.

Сывă пултăр Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ — совет халăхĕн ҫĕнтерĕвĕсене хавхалантаракан тата организацилекен парти!

Сывă пултăр пирĕн Совет правительстви!

Сывă пултăр пирĕн хăватлă социализмла Тăван ҫĕршыв!

ХАҪАТСЕН СТРАНИЦИСЕМ ТĂРĂХ

ПАРТИ ВĔРЕНĔВĔН ҪУЛНЕ ĂНĂҪЛА ВĔҪЛЕССИШĔН

Ялсенче парти вĕренĕвĕн ҫулĕ вĕҫлениччен вăхăт нумай юлмарĕ. Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаҫат ҫак ыйтупа апрелĕн 16-мĕшĕнче умстатья пичетлесе кăларчĕ. Унта вăл ҫакна палăртать: 1952—1953 вĕренӳ ҫулĕнче районта парти вĕренĕвне пурĕ 1.200 ҫынна хутшăнтарнă.

Хаҫат КПСС райкомĕн штатра тăман лекторĕсем марксизм-ленинизм теорине вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе кăҫалхи вĕренӳ ҫулĕнче парти историйĕн кĕске курсĕ тăрăх 67 лекци тата партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениалле произведенийĕ тăрăх 65 лекци вулани ҫинчен пĕлтерет.

Кунпа пĕрлех хаҫат парти вĕренĕвĕнчи ҫитменлĕхсене тата вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса парать.

«Вĕренӳ ҫулĕ вĕҫлениччен вăхăт нумай юлмарĕ,—тесе ҫырать хаҫат умстатьяра. — Халĕ пуҫламăш парторганизацисен пухусенче парти вĕренĕвĕ мĕнле пыни ҫинчен сӳтсе явмалла, вĕренӳ ҫулне ăнăҫлă вĕҫлес тĕлĕшпе конкретлă ĕҫсем туса ирттермелле».

Парти вĕренĕвĕн ыйтăвĕсене куллен-кун ҫутатасси—районти тата хулари хаҫатсен чыслă тивĕҫĕ. Вĕренӳ ҫулĕ вĕҫленнĕ вăхăтра вĕсен кружоксемпе политшкулсен тата харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен опытне пĕтĕҫтерсе сарма тăрăшмалла, парти вĕренĕвĕнчи ҫитменлĕхсене хăюллăн уҫса палăртмалла.

ТРАКТОР БРИГАДИСЕМПЕ УЙ-ХИР БРИГАДИСЕМ ХУШШИНЧИ ҪЫХĂНУ

Комсомольски районĕнчи **«Октябрь ялавĕ»** хаҫат ку ыйтăва хăйĕн апрелĕн 16-мĕшĕнчи номерĕнче анлă ҫутатрĕ. Районти машина-трактор станцийĕнчи механизаторсем тракторпа тумалли ĕҫсен 1952 ҫулхи планне, пĕтĕмĕшпе илсен, 103,6 процент тултарнă, тракторпа тунă ĕҫсен хăйне ларакан хакне йӳнетнĕ, ҫав вăхăтрах горючи, укҫа чылай перекетленĕ. Уйрăмах Шемякин, Коновалов тата Степанов юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем лайăх ĕҫленĕ. Трактористсенчен Родионов, Акчурин, Можаев, Воронов юлташсем, комбайнерсенчен Самарина, Кузнецов, Сафьянов юлташсем палăрнă. Анчах, МТС дирекцийĕ пĕлтĕр трактор бригадисемпе уй-хир бригадисем хушшинчи ҫыхăнăва тивĕҫлипе йĕркелеймен, ҫавна пула МТС ĕҫĕнче те, колхозсен ĕҫĕнче те пысăк ҫитменлĕхсем пулнă. Асăннă ҫитменлĕхе кăҫал пĕтерме кирлине палăртса, Малышев юлташ ҫапла ҫырать:

«Халĕ пирĕн умра механизаторсемпе уй-хир бригадисем хушшинчи ҫыхăнăва татах та ҫирĕплетес, пур ĕҫе те пĕрле хатĕрленĕ план тăрăх туса пырас, пĕрпĕрне куллен пулăшса пырас задача тăрать».

Паллă тракторист И. Родионов юлташ механизаторсемпе уй-хир бригадисем хушшинчи ҫыхăнăвăн пĕлтерĕшне лайăх ăнланнă. Вăл пĕлтĕр, «Красная звезда» колхозра ĕҫлесе, ҫулталăкри плана 202 процент тултарнă.

«Ҫак ҫитĕнĕве эпĕ,—тесе ҫырать вăл хаҫатра,—трактора кал-кал ĕҫлеттернине пула, уй-хир бригадисемпе тачă ҫыхăнса ĕҫленине пула тума пултартăм. Уй-хир бригадисем ĕҫлеме мĕн кирлине пурне те туса пачĕҫ».

Вăл кăҫал та «Красная звезда» колхозрах ĕҫлет, «НАТИ» тракторпа 1.600 гектар чухлĕ ĕҫ тума, тĕштырă туса илмелли плана ирттерсе тултарма сăмах парать.

Молотов ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадирĕ Г. Шемякин юлташ, трактор бригадисемпе уй-хир бригадисем пĕр-пĕрипе тачă ҫыхăнса ĕҫленипе, колхоз ҫулсеренех тырпул тухăҫлăхне ӳстерсе пынине палăртать. Бригада кăҫал кашни гектартан вăтам шутпа 16 центнертан кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет.

«Эпĕ ертсе пыракан уй-хир бригадинче трактористсем шыв, краҫҫын е ытти материалсем ҫителĕксĕр пулнипе нихҫан та ĕҫе чарман. Эпир трактористсене тухăҫлă ĕҫлеме кирлĕ условисене яланах вăхăтра туса панă. Ку вара трактор бригадипе уй-хир бригади хушшинчи ҫыхăнăва татах ӳстерет, ĕҫ пахалăхне хăпартать,—тесе ҫырать вăл хăйĕн статьинче.

Трактор бригадисемпе уй-хир бригадисем хушшинчи ҫыхăнăва ҫирĕплетни—машина-трактор станцийĕсенчи хăватлă техникăпа колхоз производствинче туллин усă курма пулăшакан майсенчен пĕри. Районти хаҫатсен ҫак пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăва тăтăшах тĕплĕн ҫутатса тăрас пулать.

ЯЛХУҪАЛĂХ ПРОДУКЧĔСЕМ ХАТĔРЛЕС ĔҪЕ ВАЙЛАТМАЛЛА

Государствăна ялхуҫалăх продукчĕсем хатĕрлесе парасси—куллен туса пымалли ответлă ĕҫ. **«Колхоз хаҫачĕ»** ҫак ыйтупа умстатья пичетлерĕ. Унта вăл Элĕк районĕнчи чылай колхозсенче ку ĕҫ сӳрĕк пынине палăртать. Район пĕрремĕш кварталта сĕт хатĕрлевĕн планне 68,6 процент, ҫăмарта хатĕрлевĕн планне—6,8 процент, тир хатĕрлевĕн планне 32 процент кăна тултарнă. Хаҫат ку ĕҫри пысăк ҫитменлĕхсемпе чăрмавсене уҫса палăртать.

«Халĕ сĕт-ҫу тата ҫăмарта хатĕрлемелли хĕрӳ тапхăр,—тесе ҫырать хаҫат.— Анчах райпотребсоюзăн хатĕрлев кантурĕн директорĕ Матвеев юлташ ҫăмарта хатĕрлес тĕлĕшпе ĕҫлекенсене тупса ҫитермен, 38 ҫын вырăнне 29 ҫын кăна тупнă...»

Хаҫат маслопромăн районти кантурĕ сĕт хатĕрлес ĕҫе ҫителĕксĕр ертсе пынине палăртать. Ҫавăн пекех выльăх-чĕрлĕх хатĕрлекен пункт заведующине К. Иванов юлташа колхозсенче нучах пулманшăн, вăхăта ытларах канцелярире ларса ирттернишĕн критиклет. Хатĕрлев организацийĕсен тата хăшпĕр колхозсен правленийĕсем ҫаврăнăҫусăр ĕҫленине пула, район сӳс-кантăр хатĕрлес енĕпе те калама ҫук юлса пырать. Хăшпĕр колхозсенче, сăмахран, Куйбышев ячĕпе тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче, кантăра 100—150 центнер ҫĕртсе янă.

Хаҫат районта сĕт тата аш-какай сутăн илсе хатĕрлес ĕҫ япăх пынине кăтартса парать.

«Пĕрремĕш квартал иртсе кайрĕ пулин те,—тесе ҫырать хаҫат.—райпотребсоюз тата унăн хатĕрлев кантурĕ пĕр килограмм сĕт те, пĕр килограмм аш-какай та сутăн илсе хатĕрлемен».

«Колхоз хаҫачĕ» ялхуҫалăх продукчĕсем хатĕрлевне вăйлатма, колхозсемпе колхозниксем хушшинче тӳлев дисциплинине ҫирĕплетме чĕнет.

Экзаменсем вĕҫленчĕҫ

Шупашкарти кооператив техникумĕнче III-мĕш курсра экзаменсем вĕҫленчĕҫ. Ҫак кунсенче вĕренекенсем республикăри суту-илӳ организацийĕсене практикăна тухса кайрĕҫ. Практика уйăх ҫурă хушши пырать.

В. ВАРСОНОФЬЕВ.

Агитаторсене пулăшма

ССР Союзĕнчи государство заемĕсем

Пирĕн социализмла ҫĕршыв вăй-хăвачĕ ӳссе пыни СССР государство бюджетĕнче питех те лайăх палăрса тăрать. Совет государствин бюджечĕ ҫултан-ҫул пысăкланать. Ку вăл пирĕн ҫĕршывăн социализмла экономики малалла хăватлăн аталанса пыни, ĕҫҫыннисен пурнăҫĕ лайăхланса тата культури ӳссе пыни ҫинчен калать.

«Вăрҫа историлле ҫĕнтерӳпе вĕҫлесе,—терĕ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче ЦК ĕҫĕсем ҫинчен тунă отчетлă докладра,—Совет Союзĕ хăйĕн хуҫалăх аталанăвĕн ҫĕнĕ тапхăрне кĕчĕ. Совет государстви кĕске срокрах, хăйĕн вăйĕпех тата хăйĕн укҫи-тенкипех, ютран пулăшу илмесĕр, вăрҫă аркатнă хуҫалăха юсаса ҫитерсе малалла аталантарчĕ, вăрҫăччени вăхăтри хуҫалăх показателĕсене кая тăратса хăварчĕ».

Пирĕн ҫĕршывра коммунизм строительствин сталинла аслă программи пурнăҫланса пырать. Промышленность, транспорт тата ялхуҫалăхĕ вăйлă аталанаҫҫĕ. Атăлпа Днепр тата ытти юханшывсем ҫинче гидроэлектростанцисем тăвас, пăрахутсем ҫӳретме тата ҫĕре шăварма пысăк каналсем тăвас, ҫĕршывăн калама ҫук пысăк территорийĕнче уй-хирсене хӳтĕлекен вăрмансем лартас ĕҫ пурнăҫланса пырать.

Халăх хуҫалăхĕн мĕнпур отраслĕсем ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем тунипе обществăн материальнăй пурнăҫĕ лайăхланать тата культура шайĕ ӳсет. Ҫакă вăл пирĕн ҫĕршывăн наци тупăшĕ ӳсе пынинчен лайăх курăнать. 1940 — 1951 ҫулсем хушшинче наци тупăшĕ 83 процент ӳснĕ.

1952 ҫулта Совет Союзĕнчи ĕҫҫыннисем хăйсен пурнăҫпа культура ыйтăвĕсене тивĕҫтерме, унччченхи ҫулсенчи пекех, наци тупăшĕн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне илнĕ. Наци тупăшĕн ытти пайĕ государство, колхозсемпе коопераци организацийĕсенче юлнă, вăл социализмла производствăна ӳстерме тата государствăпа обществăн ытти ыйтăвĕсене тивĕҫтерме кайнă.

Социализмла государство халăхăн пурнăҫпа культура ыйтăвĕсене тивĕҫтерессишĕн куллен тăрăшать. Партипе правительство халăх пурнăҫне лайăхлатассишĕн тăрăшнине пурне те куллен кирлĕ таварсен хакĕсене тăтăшах йӳнетсе пыни, продукци туса кăларассине ӳстерсе пыни тата халăха таварсем ҫултан-ҫул ытларах сутни уççăн кăтартса парать. Вăрҫă хыççăнхи ҫулсенче тавар хакĕсене йӳнетнине пула халăх ҫĕршер миллиард тенкĕлĕх усă курнă.

Таварсен вакккăн сутмалли государственнăй хакĕсене йӳнетсе пынă май рабочисемпе служащисен реальнăй ĕҫ укҫи ӳссе пырать, колхоз хресченĕсем пысăк усă илеҫҫĕ, совет укҫа-тенки ҫирĕпленет.

Совет ҫĕршывĕнче хуҫалăхпа культура строительстви тата ытларах вăйланса пымалла. И. В. Сталин юлташ «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениалле произведенинче панă кăтартусене никĕсе хурса, Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăхра коммунизм строительствине малалла аталантармалли ҫул-йĕрсене палăртса пачĕ. Сталинла пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăх плана пурнăҫлама укҫа-тенкĕ тупас ĕҫре государство заемĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраҫҫĕ. Пилĕк ҫуллăх план ăнăҫлă пурнăҫланасси государство бюджетне тупăшсем енĕпе те, расходсем енĕпе те яланах пурнăҫласа пынинчен килет.

Пирĕн ҫĕршывра бюджетри укҫа-тенкĕн пысăк пайĕ халăх хуҫалăхне аталантарма, социальнăй ĕҫсемпе культура ĕҫĕсем валли каять. Халăх хуҫалăхĕ валли уйăрса панă укҫа-тенкĕн пысăк пайне капитальнăй строительствăна пурнăҫлама расходлаҫҫĕ. Ҫак укҫа-тенкĕпе коммунизмăн сталинла аслă стройкисене тăваҫҫĕ, ҫĕнĕ фабрикăсемпе заводсем лартаҫҫĕ, шахтăсем, машина-трактор станцийĕсем тăваҫҫĕ, пурăнмалли ҫуртсем, шкулсемпе больницăсем лартаҫҫĕ.

Социальнăй ĕҫсемпе культура ĕҫĕсем валли укҫа-тенкĕ нумай панипе халăх сывлăхне сыхлас тата халăха вĕрентес ĕҫсем малалла лайăхланса пыраҫҫĕ. Больницăсен шучĕ тата вĕсенчи койкăсен хисепĕ ҫултан-ҫул нумайланать. Шкулсенче, техникумсенче, училищĕсенче, аслă шкулсенче вĕренекенсен йышĕ ӳссе пырать.

Республикăсен бюджечĕсемпе вырăнти бюджетсем тăрăх расходланакан укҫа-тенкĕн пысăк пайĕ халăха вĕрентес, сывлăха сыхлас ĕҫсене, социальнăй обеспечени валли, коммунальнăй хуҫалăх тата пурăнмалли ҫуртсем лартас ĕҫе вăйлатма, вырăнти промышленноҫа тата халăх хуҫалăхĕн ытти отраслĕсене аталантарма каять.

Государство бюджечĕн, республикăсен тата районсен бюджечĕсен тупăшĕсенче заемсенчен пухăнакан укҫа-тенкĕ чылай пысăк вырăн йышăнать. Совет Союзĕнчи государство заемĕсен халăх хуҫалăхĕнчи питех те пысăк пĕлтерĕшĕ ҫинчен каласа, Сталин юлташ ҫĕршыври укҫа-тенке кредит учрежденийĕсенче, кооперацине государство учрежденийĕсенче пухма, вĕсемпе чи малтан промышленноҫа аталантарма усă курма кирлине палăртнă.

ССР Союзĕнчи халăх массисем государство заемĕсен облигацийĕсене илме пурте пĕр кăмăллă пулса, пĕр харăс ҫыраҫҫĕ. Иртнĕ ҫулта СССР халăх хуҫалăхне аталантармалли заема (1952 ҫулхи кăларăм) правительство пĕтĕмпе 30 миллиард тенкĕлĕх кăларма йышăннă пулсан, ку заема майăн 8-мĕшĕ тĕлне 35 миллиард та 712 миллион та 374 пин тенкĕлĕх вырнаҫтарнă. Ҫав вăхăт хушшинче пирĕн Чăваш республикинче 101 миллион тенкĕлĕх заем сарнă. Заем сарнинчен пухăннă укҫаран пирĕн республикăн, районсен тата ялсен бюджечĕсене 60 миллион тенкĕ таран укҫа кĕнĕ. Ҫак укҫапа ҫĕнĕ шкулсем, больницăсем лартнă, хуласен коммунальнăй хуҫалăхне малалла аталантарнă.

Государство заемĕсен облигацийĕсене туянса, пирĕн ҫĕршыври ĕҫҫыннисем ҫĕршыв хуҫалăхне малалла ӳстерсе пыма, халăх пурнăҫне лайăхлатма тата культурине ӳстерме, хамăрăн социализмла Тăван ҫĕршывăн хăватне тĕреклетме пулăшаҫҫĕ.

Совет государстви заем кăларнипе пухăнакан укҫа пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăх плана пурнăҫлама, халăх хуҫалăхне малалла аталантарма, социальнăй ĕҫсемпе культура ĕҫĕсем валли каять.

Совет заемĕсем ҫултан-ҫул нумайрах сарăлни, пирĕн ĕҫҫыннисем заем облигацийĕсене илме пĕр харăс ҫырăнни, облигацисем туянакансен йышĕ ӳссе пыни пирĕн ҫĕршывра кăларакан заемсем чăнчăн халăх заемĕсем пулни ҫинчен калаҫҫĕ.

1927 ҫулта СССР халăх хуҫалăхне индустриализацилемелли государственнăй заемăн облигацийĕсене илме ултă миллион ҫын ҫырăннă пулсан, 1941 ҫулта подписчиксен йышĕ 60 миллион ҫынна ҫитнĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн ҫĕршывра государство заемĕн облигацийĕсене хăйсен аллинче тытса усракансем 70 миллион ҫынна яхăн.

Государство заемĕсем Шупашкар хулинче те ҫултан-ҫул нумайрах та нумайрах сараласҫĕ. СССР халăх хуҫалăхне юсамалли тата аталантармалли пĕррремĕш государственнăй заемăн (1946 ҫулхи кăларăм) облигацийĕсене илме хулара 21 пин ҫын, пĕтĕмпе 10 миллион тенкĕлĕх ҫырăннă пулсан, СССР халăх хуҫалăхне аталантармалли 1952 ҫулта кăларнă государственнăй заемăн облигацийĕсене илме 40.039 ҫын, пĕтĕмпе 19 миллион та 505 пин тенкĕлĕх ҫырăннă.

Совет Союзĕнче государство заемĕсем социализмла пĕтĕм обществăна пысăк усă кӳреҫҫĕ, ҫавăнпа пĕрлех унтан заемсен облигацийĕсене илекен ҫынсемшĕн те чылай усă пулать. Вăрҫă хыççăнхи сталинла пилĕкҫуллăх (тăваттăмĕш пилĕкҫуллăх) ҫулĕсенче ҫеҫ государство заемĕсем тăрăх вылявсенче тухнă укҫана халăха пĕтĕмпе 16,8 миллиард тенкĕ тӳленĕ.

Пирĕн Чăваш республикинче 1952 ҫулта заемсен вылявĕсенче тухнă укҫана халăха пĕтĕмпе 20.773 пин тенкĕ, 1953 ҫулхи пĕррремĕш кварталта 7.780 пин тенкĕ тӳленĕ. Заем вылявĕсем тăрăх Шупашкарти ĕҫҫыннисене 1948 ҫулта 930 пин тенкĕ, 1949 ҫулта—1.500 пин тенкĕ, 1950 ҫулта—2.300 пин тенкĕ, 1951 ҫулта—3.200 пин тенкĕ, 1952 ҫулта — 4.200 пин тенкĕ ытла тӳленĕ. 1952 ҫулта Шупашкарта икĕ ҫын 50-шар пин тенкĕ, ултă ҫын—25-шер пин тенкĕ, ҫичĕ ҫын 10-шар пин тенкĕ, 24 ҫын 5-шер пин тенкĕ, 316 ҫын пиншер тенкĕ выляса илнĕ. Пĕтĕмпе заемсем тăрăх укҫа выляса илнисем Шупашкарта 2.672 ҫын пулнă.

Заемсем тăрăх 5 пин тенкĕрен пуҫласа 50 пин тенкĕ таран выляса илнисем — тĕрлĕ профессиллĕ тата специальноҫлă ҫынсем, рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем. Вылявра пысăк выигрыш тухнисем хушшинче электроаппаратура заводĕнче ĕҫлекенсем 6 ҫын, Чапаевски поселокра пурăнакансенчен 4 ҫын, пир-авăр промышленноҫĕнче ĕҫлекенсем 5 ҫын, шкулсемпе институтсен преподавателĕсем 9 ҫын, институтсен студенчĕсем 3 ҫын, кил хуҫи хĕрарăмĕсем 6 ҫын, хула ҫывăхĕнчи колхозсенчен 3 ҫын.

Ҫак тĕслĕхсенчен пирĕн халăх государство заемĕсенчен пысăк усă илни уççăнах курăнать. Пирĕн ҫĕршывра государство заемĕсем ҫакăн пек ăнăҫлă сарăлни совет ҫыннисен патриотла шухăш-кăмăлĕ ҫӳлĕ пусăмра тăни ҫинчен, вĕсем социализмла Тăван ҫĕршыва чĕререн юратни, Ленин—Сталин партийĕ тавра тачă пĕтĕҫни; вĕсем партипе правительствăн решенийĕсене пĕтĕмпех пурнăҫлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешме хатĕр пулни ҫинчен калать.

Совет заемĕсем ҫинчен ăнлантарас ĕҫе кунтан-кун вăйлатса пыни кирлĕ. Ĕҫҫыннисене заем пĕтĕм халăх ĕҫĕ пулни ҫинчен, заем укҫи сталинла пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăх плана пурнăҫлама, хуҫалăхпа культурăна малалла аталантарма кайни ҫинчен ăнлантарса парас пулать. Ку ĕҫе мĕнпур агитаторсен хутшăнмалла.

Кашни перекет кассинче, кашни клубра, вулав ҫуртĕнче, колхоз правленийĕнче, ял Совет канцелярийĕнче справка сĕтелĕ тумалла. Ҫав сĕтелсем ҫине заем вылявĕсен таблицисене пурне те пухса хумалла. Кашни ҫын хăйĕн облигацийĕсем тăрăх вылявра укҫа тухнине пĕлме пултартăр. Ĕҫҫыннисем государство заемĕсем пирки панă кашни ыйту ҫине ответ парас пулать.

Совет заемĕсем ҫинчен пропагандăлас тĕлĕшпе государство кредичĕпе перекет ĕҫне пулăшакан комиссисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем тата заем уполномоченнăйĕсем хальхи вăхăтра предприятисенчи, учрежденисенчи пухусенче СССР халăх хуҫалăхне аталантармалли 1952 ҫулта кăларнă государство заемне сарас, заем укҫине пухас тĕлĕшпе мĕнле ĕҫлени ҫинчен отчетсем туса пама тивĕҫлĕ.

Государство заемĕсем пирĕн социализмла Тăван ҫĕршыва тата ытларах чечеклентерме, коммунизм строительствин сталинла аслă программине пурнăҫлама укҫа-тенкĕ пухма май панине кашни ҫын лайăх ăнланса илтĕр, государствăн финанс ĕҫне вăйлатма тăрăштăр.

П. ЕФИМЕНКО.

Комсомолпа физкультура активӗн республикӑри пухӑвӗ

Шупашкарта комсомолпа физкультура активӗн республикӑри пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура 1952—1953-мӗш çулсенчи хӗллехи спорт сезонӗн итогӗсем тата 1953 çулхи çуллахи спорт сезонне хатӗрленес тата ӑна ирттерес тӗлӗшпе умра тӑракан задачӑсем çинчен Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн заместителӗ М. Андреев юлташ тунӑ доклада сӳтсе явнӑ.

Иртнӗ çулта колхозсенче, учрежденисемпе предприятисенче çӗнӗрен 106 физкультура коллективӗ организациленӗ, физкультурниксен йышӗ 9 пин çын чухлӗ ӳснӗ, 20.990 çын ГТО нормисене панӑ. Физкультурниксен спорт ӑсталӑхӗ те ӳсе пырать. 1952 çулта 5.167 спортсмен-разрядник хатӗрленӗ, республикӑн 183 рекордне çӗнетнӗ.

Анчах республикӑри физкультурӑпа спорт ӗçӗнче пысӑк çитменлӗхсем пур. Нумай предприятисемпе учреждениссенчи физкультура организацийӗсем хут çинче кӑна шутланаççӗ.

Куславккари çуртсем тӑвакан заводри комсомолецсемпе çамрӑксен пӗчӗк пайӗ кӑна «Шахтер» спорт обществинче тӑрать. Канашри вагонсем юсакан заводра та физкультурниксен йышӗ питӗ сахал. «Локомотив» спорт обществин совечӗ тата заводри ВЛКСМ комитечӗ спорт ӗçне лайӑхлатас тӗлӗшпе нимӗн те тумаççӗ. Заводра футболпа хоккей командисем кӑна ӗçлеççӗ. Ытти спортпа кунта интересленмеççӗ.

Республикӑри çичӗ çул вӗренмелли 57 шкулта халиччен те спорт площадкисем туман.

Шкулсен спартакиадине 15 районти командӑсем кӑна хутшӑннӑ.

Физкультурӑпа спорт ӗçӗсен комитечӗ тата ВЛКСМ Чӑваш обкомӗ аслӑ шкулсемпе техникумсенчи физкультура коллективӗсен ӗçне лайӑхлатма куллен тӑрӑшмаççӗ. Нумай студентсем физкультурӑпа спорт ӗçне хутшӑнмаççӗ. Çапла, Шупашкарти музыка училищинче вӗренекенсенчен çурри ытла ГТО значокӗн нормисене паман.

Республикӑри 62 колхозра халиччен те физкультура коллективӗсем туман. Ишлей, Красноармейски, Советски районсенчи чылай колхозсенчи физкультура организацийӗсем саланса кайнӑ.

Улатӑр, Çӗмӗрле хулисем тата Куславкка поселокӗ Атӑлпа Сӑр хӗррине выртнӑ. Анчах кунта шыв спортне аталантарма тӑрӑшмаççӗ, çуллахи спорт сезонне те начар хатӗрленеççӗ.

«Труд», «Медик», «Пищевик» спорт обществисем инструктор-общественниксем хатӗрлес, çуллахи спорт сезонне хатӗрленес тӗлӗшпе начар ӗçлеççӗ.

Греков юлташ (Шупашкарти пир-авӑр техникумӗнчи физкультура преподавателӗ) шкулсенче физкультура ӗçне вӑйлатма кирли çинчен каларӗ, хӑшпӗр районсенчи физкультурӑпа спорт ӗçӗсен комитечӗсем ГТО значокӗсемпе разряд значокӗсене спорт ӗçне хутшӑнман çынсене панине палӑртрӗ.

Етӗрнери педагогика училищи те физкультура кадрӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе питех те çителӗксӗр ӗçлет. Унтан вӗренсе тухнӑ çынсенчен нумайӑшӗ спорт енӗпе кирлӗ пек ӗçлеймеççӗ.

Грицкевич (республикӑри Досааф оргкомитечӗ) физкультура коллективӗсемпе Досааф организацийӗсем хушшинчи çыхӑнӑва вӑйлатма кирли çинчен каларӗ.

— ВЛКСМ обкомӗн çарпа физкультура пайӗ пире нимӗнле пулӑшу та памасть. 1949 çултанпа ВЛКСМ райкомӗсемпе хула комитечӗсен çарпа физкультура пайӗн заведующийӗсен семинарне ирттермен, — терӗ Канаш хулинчи физкультурӑпа спорт ӗçӗсен комитечӗн председателӗ Наумов юлташ.

Пренире çавӑн пекех Лихошерст, Вилюнова (çамрӑксен спорт шкулӗн директорӗ), Вазиков (Сӗнтӗрти физкультурӑпа спорт ӗçӗсен комитечӗн председателӗ), Алфер (ВЛКСМ Шупашкар хула комитечӗн секретарӗ), Паскудин (ВЛКСМ Чӑваш обкомӗн секретарӗ), Никитин («Колхозник» спорт обществи совечӗн председателӗ), Ефимова (Чӑваш АССР Сывлӑх министрӗ) тата ытти юлташсем те пурӗ 12 çын тухса каларӗç.

Çуллахи спорт сезонне хатӗрленес ӗçри пысӑк çитменлӗхсене палӑртса, тухса калакансем вӗсене пӗтермелли майсене кӑтартса пачӗç, физкультура кадрӗсем суйласа илес ӗç çине тимлӗн пӑхма кирлине асӑрхаттарчӗç.

Тӗрӗслеме янӑ çырусем тӑрӑх

«Коммунизм ялавӗ» хаçат редакцийӗ Хӗрлӗ Чутай районӗнчи колхозсенче агрозоотехника курсӗсен ӗçне тивӗçлипе организациленменни çинчен çырнӑ заметкӑна Хӗрлӗ Чутай райисполкомӗн ялхуçалӑх пайне янӑччӗ.

Ялхуçалӑх пайӗ заметкӑри фактсем пӗтӗмпех тӗрӗс пулни çинчен пӗлтерчӗ. Колхозниксене агрозоотехникӑна вӗрентес ӗç çине çиелтен пӑхнӑшӑн ялхуçалӑх пайӗн аслӑ зоотехникне М. Макашкинӑна вырӑнтан кӑларса, участокри зоотехник пулса ӗçлеме куçарнӑ, агрозоотехника курсӗсене ертсе пыма уйӑрнӑ ытти юлташсене ӗçе лайӑхлатма хушнӑ.

Ялхуçалӑх пайӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, юлашки вӑхӑтра колхозсенче агрозоотехника курсӗсен занятийӗсене план тӑрӑх ирттерсе пынӑ, халӗ пур çӗрте те экзамена хатӗрленеççӗ.

* * *

Çӗмӗрле райпотребсоюзӗн правленийӗ «Суту-илӳ ӗçне вӑйлатассишӗн тӑрӑшмаççӗ» ятлӑ çырури чылай фактсене тӗрӗс кӑтартса пани çинчен пӗлтерчӗ. Çырӑва райпотребсоюз правленийӗн ларӑвӗнче сӳтсе явнӑ. Райпотребсоюз правленийӗ суту-илӳ пайӗн заведующине Сядров юлташа администраци енӗпе ответ тыттарнӑ, Тӑванкасси ялпо правленийӗн председателӗ Григорьев юлташ работниксен ӗçне тӗрӗслесе тӑманнине палӑртнӑ. Ялпо ӗçне лайӑхлатма мерӑсем йышӑннӑ. Çакна май Тӑванкасси ялповӗн ӗçӗ лайӑхланнӑ. Пӗрремӗш кварталти тавар çаврӑнӑш планне ялпо ирттерсе тултарнӑ.

* * *

Чкаловски районӗнчи суту-илӳ пайӗ «Культмаг ӗçне лайӑхлатмалла» ятлӑ çыру тӗрӗс пулни çинчен пӗлтерчӗ. Культура таварӗсемпе суту-илӳ тӑвакан магазин продавецне Гафуров юлташа дисциплинӑна пӑсса ӗçленӗшӗн астутарнӑ, магазинти ӗçе çитес кунсенчех тивӗçлипе йӗркелесе çитерме хушнӑ.

Шупашкарти пионерсен çуртӗнче.

ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Пионерсем скульптура кружокӗнче вӗренеççӗ. Кружока И. Ф. Кудрявцев скульптор ертсе пырать.

М. ЕГОРОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Редакцие килнӗ çыру

Писательсен союзӗ ответ памасть

Манӑн юлташ, Геннадий Сотов, 1952 çулхи май уйӑхӗнче «Çамрӑк коммунист» хаçат редакцине «Çуллахи ир» ятлӑ сӑвӑ ячӗ. Отвечӗ июль уйӑхӗнче çитрӗ. Ӑна Чӑваш Совет писателӗсен союзӗн правленин председателӗ Уйӑп Мишши çырнӑ. Г. Сотов патне çырнӑ çырӑва вуланӑ хыççӑн эпир питех те савӑнтӑмӑр.

Акӑ мӗн çырнӑ унта:

«...Эпир сӑвӑ çыракансене пулӑшма яланах хатӗр. Хӑвӑрӑн лайӑх сӑвӑсене пирӗн пата ярса парӑр...»

— Ну, ӗç тухрӗ. Сӑвӑсене писательсен союзне ярса паратӑп. Унтан сӑвӑ çырас ӗçри манӑн çитменлӗхсене çырса пӗлтерӗç, тӗрлӗрен канашсем парӗç, — шухӑшларӑм эпӗ Г. Сотов патне çырнӑ çырӑва вуласан.

Анчах савӑнни усӑсӑр пулчӗ.

Пуçларӑм хайхи писательсен союзне çырусем çырма. Пӗрремӗш çырӑва 1952 çулхи июлӗн 10-мӗшӗнче почтӑпа ятӑм. Кӗтрӗм ответ килессе. Анчах кӗтсе илеймерӗм. «Çыру çитмерӗ пулӗ», — тесе шухӑшларӑм хам тӗллӗн. Вара октябрӗн 30-мӗшӗнче тепӗр çыру çырса ятӑм. Ответ пулмарӗ. Ноябрь уйӑхӗнче писательсен союзне икӗ сӑвӑ ярса патӑм. Каллех, малтанхи пекех, ответ кӗтсе илеймерӗм.

Декабрь уйӑхӗнче, шкулти литература кружокӗ «Çамрӑксен сасси» ятлӑ журнал кӑларма пуçласан, писательсен союзне татах тепӗр çыру ятӑмӑр, мӗнле темӑсемпе çырнӑ произведенисене пичетлемелли çинчен канаш ыйтрӑмӑр. Ответне каллех кӗтсе илеймерӗмӗр.

Юлашкинчен çакӑн пек ыйту туса тӑрать: мӗнле чунлӑ çынсем ӗçлеççӗ-ши писательсен союзӗнче? Хӑçан ответ кӗтсе илӗпӗр-ши?

В. ПЕТРОВ,
Куславкка районӗнчи Тӗрлемес шкулӗнчи литература кружокӗн членӗ.

Шемшер ял Совечӗ финанс планне мӗншӗн тултарса пыраймасть?

Шупашкар районӗнчи чылай ял Совечӗсем финанс планне уйӑхран уйӑха ӑнӑçлӑ тултарса пыраççӗ. Çавӑн пек ял Совечӗсенчен пӗри — Çӗньял ял Совечӗ. Вӑл кӑçалхи пӗрремӗш кварталти финанс планне мартӑн 27-мӗшӗ тӗлне тултарчӗ. Унта ял Совечӗпе пуçламӑш парторганизаци халӑх хушшинче массӑллӑ ӑнлантару ӗçне лайӑх йӗркеленӗ. Çак ӗçе ялти активистсене пурне те хутшӑнтарнӑ. Вӗсем колхозниксене партипе правительство кӑтартӑвӗсем çинчен ӑнлантарнипе пӗрлех, государство умӗнчи обязательствӑсене чи малтан пурнăçлама кирли çинчен астутараççӗ. Активистсем хӑйсен парӑмӗсене пуринчен малтан парса татса, ытти колхозниксене хӑйсенчен пример илме чӗнеççӗ.

Çӗньял ял Совечӗн яланхи финанспа бюджет комиссийӗ лайӑх ӗçлет. Вӑл активистсем хӑйсене çирӗплетсе панӑ килсенче мӗнле ӗçленине, ялхуçалӑх налогӗ тата ытти укçа-тенкӗ парӑмӗсене тӳлес ӗç мӗнле пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑрать. Налог агенчӗ Николаев юлташ кам ял Советне пырса налог тӳлессине кӗтсе лармасть, вӑл килӗрен киле çӳресе государствӑна тивӗçлӗ укçа-тенке вӑхӑтра тӳлемелли çинчен ӑнлантарса парать, укçа пухать. Çапла ӗçленипе ку ял Советӗнче халӑхран укçа-тенкӗ пухас ӗç ӑнӑçлӑ пырать.

Анчах кӑçалхи пӗрремӗш кварталта районти нумай ял Совечӗсем финанс планне тултараймарӗç. Çак ӗç уйрӑмах Шемшер ял Советӗнче питӗ начар тӑрать. Вӑл районти пур ял Совечӗсенчен те кая юлчӗ.

Финанс планне пурнăçлас ӗçре ял Совечӗ кая юлни мӗнрен килет-ха?

Чи пысӑк сӑлтавӗ çакӑ пулать: ял Совечӗ тата налог агенчӗ Кириллова юлташ укçа-тенкӗ пухас ӗç хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанса лараççӗ. Ял Совечӗн исполкомӗ хӑйӗн ларӑвӗнче финанс ыйтӑвӗсене час-час сӳтсе явать, лайӑх решенисем йышӑнать, анчах çав решенисене мӗнле пурнăçланине пачах тӗрӗслемест, организациллӗ ӗçсене манăçа хăварать.

Тепӗр сӑлтавӗ — ял Совечӗн яланхи финанспа бюджет комиссийӗ начар ӗçлени. Вӑл укçа-тенкӗ пухас ӗçе ялти актива явăçтарман. Кунти активистсенчен нумайӑшӗ государство умӗнче хӑйсем парӑмлӑ. Вӗсен ответлӑхне ӳстерме ял Совечӗпе пуçламӑш парторганизаци тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнмаççӗ.

Ял Совечӗн ӗçӗнче татӑклӑ улшăну туни кирлӗ. Райисполкомпа районти финанс пайӗн Шемшер ял Советӗнче халӑхран укçа-тенкӗ пухас ӗçе лайӑхлатма ытларах тӑрӑшас пулать.

Т. ИГНАТЬЕВ.

Ир пулакан çӗрулми лартса тӑвасси

Çӗрулмине иртерех лартса туни нумай енӗпе усӑллӑ. Çӗнӗ çӗрулми тути киввинчен нумай лайӑхрах. Унта С группӑри витамин темиçе хут нумайрах пулать. Çавӑнпа та вӑл халӑх апатӗнчи паха çимӗç пулса тӑрать.

Çӗрулмине хӑвӑртрах ӳстерсе пухса кӗртсен, эпир çӗрулминчен тӗрлӗрен продуктсем тӑвакан заводсене маларах ӗçлеме тытӑнма, çапла вара çулталӑкра нумайрах вӑхӑт хушши ӗçлеме май туса паратпӑр.

Тата çакна та шута илес пулать. Партин XIX-мӗш съезчӗ панӑ директивӑсем тӑрӑх пирӗн республикӑри колхозсенче те ӗне-выльӑхсене кӗтӳре çӳретмесӗр усрама тытӑнмалла. Çавна май выльӑх апачӗ нумай кирлӗ. Çӗрулмине ир лартса туни выльӑх апачӗ ытларах хатӗрлеме май парать. Вӑл выльӑхсемшӗн питӗ те пала çетеклӗ апат. Ытти тымар-çимӗçсем çав вӑхӑт тӗлне ӳсе ӗлкӗреймеççӗ, вӗсем вырӑнне выльӑхсене çӗнӗ çӗрулми çитерни колхозсемшӗн питӗ усӑллӑ. Ку вӑл çуллахи вӑхӑтра продуктлӑ выльӑхсен тухӑçне хӑпартма пулӑшать.

Пусӑ çаврӑнӑшӗнче çӗрулми иртерех лартса ӳстермелли чи лайӑх вырӑн удобренисемпе çемçетнӗ хура çӗртме уйӗ пулать. Çӗрулми лартса ӳстерме палӑртакан хура çӗртме уйне кӗркунне кашни гектар пуçне 20—30-шар тонна тислӗк тӑкаççӗ, унтан пӗтӗм тарӑнӑшӗпех сухаласа хӑвараççӗ. Сухаланӑ чухнех тислӗкпе пӗрле минераллӑ удобренисем те сапмалла. Кашни гектар çине суперфосфат 6—7 центнер, аммоний сульфачӗ 3—5 центнер, кали тӑварӗ 2—3 центнер сапма юрать.

Кӗркунне уя тислӗк турттарма май килмесен пулсан, ӑна халӗ те тӑкма юрать. Çӗрӗк тислӗке малтанрах асӑннӑ минераллӑ удобренисемпе пӗрле хура çӗртме уйне тӑкмалла. Çав ӗçе çуркунне культиваци тунӑ е сухаланӑ вӑхӑтра тӑвас пулать. Кун пек чухне кашни гектар çине 14—16-шар тонна çӗрнӗ тислӗк тӑксан çителӗклӗ.

Ир лартнӑ çӗрулмине хӑвӑртрах ӳссе çитме борлӑ удобренисем вӑйлӑ пулӑшаççӗ. Тӗслӗхрен, борлӑ тата магнилӗ каяшсене гектар çине 50-шар килограмм, е бур текен çавӑн пек каяша — 10-шар килограмм сапаççӗ.

Ӳснӗ вӑхӑтра çӗрулмине азотлӑ удобренисем пама юрамасть. Вӗсем çимӗç ӳссе пулас вӑхӑтне тӑсаççӗ. Азотлӑ удобренисем вырӑнне, ир пулакан çӗрулмине фосфорлӑ тата калилле удобренисем памалла. Рет хушшисене кӑпкалатнӑ е купаланӑ чухне кашни гектар пуçне суперфосфат 4—3-шер центнер, кали тӑварне 2-шер центнер сапаççӗ.

Касса лартнӑ çӗрулмине удобренисем иртерех пани вырӑнлӑ пулать. Кун пек чухне фосфорпа калиллӗ удобренисемпе пӗрле азотлӑ удобрени те хушса сапас пулать.

Ир лартма 70—80 грамм йывӑрӑш çӗрулмисене суйласа илеççӗ. Касӑлнӑ, лапчӑннӑ е пӑсӑлнӑ çӗрулмисем вӑрлӑхра пачах пулмалла мар. Лартма суйласа илнӗ çӗрулми йӑлтах пӗр сорт пулмалла. Вӗтӗ çӗрулми ир лартса тума пачах юрӑхсӑр.

Лартма уйӑрнӑ çӗрулмине малтан яровизацилеççӗ. Хӑвӑртрах ӳстермелле тӑвас тесе, ӑна нӳрӗ япаласемпе витсе, нӳрӗ япаласем ӑшӗнче тытса яровизациленӗ питӗ вырӑнлӑ. Çӗрулмине çавӑн пек яровизацилеме тӗттӗм вырӑнта та, çутӑ вырӑнта та май пулать. Вӑрлӑха ещӗксене е урайнех нӳрӗ япаласем сапса витсе хураççӗ. Пӑчӑ кӗрпипе е вӗтӗ торфпа усӑ курма пулать. Вӗсене шыв сапса нӳрлетеççӗ. Çавӑн пек тусассӑн çӗрулми вӑрлӑхӗ хӑвӑртрах яровизациленет. Яровизаци тапхӑрне ирттерме çӗрулмине 14—15 градус ӑшӑра 15—20 кун хушши тытни кирлӗ. Мӗнпур ӗçӗ те вӑрлӑх типсе каясран асӑрханассинче кӑна. Ытлашши нӳрӗ е ытлашши типӗ тытма юрамасть. Шыв виçине пӗлме пӑчкӑ кӗрпине алла илсе чӑмӑртаса пӑхмалла. Вӑл нӳрӗ пултӑр, анчах шыв тухни пулмалла мар.

Вӑрлӑха çапла майпа яровизацилесен вӑл шӑтса калчаланать кӑна мар тата малтанхи тымарсене те ярать. Вӗсем питӗ хӑвӑрт ӳссе каяççӗ пулсан, вӑрлӑх выртакан пӳлӗме уçса сивӗтмелле.

Çӗрулми вӑрлӑхне кӑшт урӑхларах яровизацилеме те пулать. Вӑрлӑха малтан яланхи пекех çутӑра шӑтараççӗ. Лартас умӗн 4—5 кун маларах ӑна нӳрӗ пӑчкӑ кӗрпипе е вӗтӗ торфпа витсе хураççӗ. Шӑтса тухнӑ вӑрлӑх çакӑн пек нӳрӗре малтанхи вӗтӗ тымарсене те кӑларать.

Иртерех лартса тума çакӑн пек яровизацилесе хатӗрленӗ вӑрлӑха май килнӗ таран иртерех лартма тӑрӑшас пулать. Тӑпра 10 сантиметр тарӑнӑшӗнче 7—8 градуса çити ӑшӑнсан, çӗрулмине хире лартма юрать.

Лартас умӗн çӗрулмисене тӑватӑ пай туса касаççӗ. Касмалли çӗçӗсем таса пулмалла, вӗсене дезинфекцилес пулать. Вӑрлӑха лартнӑ кун тин касаççӗ.

Çӗрулмине çӑрарах лартсан вырӑнлӑрах. Ретсем хушшине 60 сантиметр, ретре çӗрулмисен хушшине 25 сантиметр хӑвармалла. Çапла лартсан, гектар çине 70—80 пин çӗрулми вырнаçмалла. Çӑрарах лартнӑ çӗрулми хӑвӑртрах ӳсет.

Çӗрулмине плугпа е окучникпа лартмалла. Пысӑк мар лаптӑксенче ӑна кӗреçепе те лартма юрать. Вӑрлӑха 6—8 сантиметр тарӑнӑшне, калчине çӳлелле туса лартас пулать.

Ир лартнӑ çӗрулмине яланхи пекех пӑхса ӳстермелле. Рет хушшисене кӑпкалатнӑ чухне çамрӑк аврӑсене тӑпрапа витӗнтересрен асӑрханмалла. Тӑпра айне тунӑ калча хӗн курса аталанать.

Пӗр тӗпри çӗрулмисен йывӑрӑшӗ 250—300 грама çитсен, ир лартнӑ çӗрулмине кӑларма тытӑнмалла. Çак вӑхӑтра, гектар çинче 60—65 пин тӗп кӑна ӳснӗ пулсан та, çӗрулми тухӑçлӑхӗ 150—195 центнер пулать.

Чӑвашсен ялхуçалӑх институчӗ иртнӗ çулла çӗрулмине иртерех лартса ӳстерес тӗлӗшпе сӑнавсем туса ирттернӗ. Сӑнавлӑ ӗçсене ученӑй агроном А. Кузнецов юлташ туса пынӑ.

Сӑнав техники çапла пулнӑ:

1. Акма 70—100 грамм йывӑрӑш çӗрулмисем суйласа илнӗ.
2. Вӑрлӑха ещӗксенче нӳрӗ арпа ӑшӗнче малтан 18—20 градус ӑшӑра, каярахпа 12—15 градус ӑшӑра 12 кун хушши тытса яровизациленӗ. Çӗрулмисем шӑтнӑ, 4—5 сантиметр тӑршшӗ вӗтӗ тымарсем кӑларнӑ.
3. Вӑрлӑха удобренисемпе лайӑх çемçетнӗ тӑпра çине майӑн 17-мӗшӗнче плугпа лартнӑ. Чӑмӑр çӗрулмисем лартнӑ.
4. Ретсем хушшине 50 сантиметр, çӗрулмисем хушшине 20 сантиметр сарлакӑш хӑварнӑ.
5. Вӑрлӑха 5—7 сантиметр тарӑнӑшне пӑрахса тӑпрапа витсе хӑварнӑ.
6. Лартнӑ чухне кашни тӗп вырӑнне 3 грамм суперфосфат, 2 грамм аммиаклӑ селитра тата 1 грамм кали тӑварӗ сапнӑ.

Ретсем хушшине кӑпкалатса тӑнӑ тата купаланӑ.

Ир пулакан сортлӑ çӗрулми мар, «Лорх» текен сорта лартнӑ пулин те, пӗр тӗпри çӗрулмисен йывӑрӑшӗ июлӗн 15-мӗшӗ тӗлне 275—300 грама çитнӗ. Гектартан мӗн чухлӗ тухнине шутласан, çӗрулми тухӑçлӑхӗ 228—250 центнер пулнӑ. Ир пулакан сортлӑ çӗрулми лартнӑ пулсан, тухӑç тата пысӑкрах пулнӑ пулӗччӗ.

Колхозсен иртерех лартса тума «Ранняя роза» тата «Эпрон» сортсемпе ытларах усӑ курас пулать. Ку сортсене пирӗн республикӑра акса тума планланӑ. Çак сортсене вӑрлӑхлӑх ӗрчетме тӑрӑшмалла, вӗсене çӗртме пуссине акса тума тытӑнмалла.

Л. ПЕЛЬЦИХ,
профессор.

Колхозсемпе совхозсенче ӗнесен сӗт тухӑçне хӑпартассишӗн пыракан социализмла ӑмӑртӑван итогӗсем

1953 çулхи апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне

Йышӑннӑ вырӑн	Колхоз, район ячӗсем	Сӑвакан кашни ӗнерен сӗт. суса илнӗ (литрпа)
1.	Çӗрпӳри государство селекци станцийӗ	1.012
2.	Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхоз	722
3.	Улатӑр районӗнчи «Победа» колхоз	573
4.	Етӗрне районӗнчи Маленков ячӗпе тӑракан колхоз	515
5.	Улатӑрти махорка совхозӗ	506
6.	Чкаловски районӗнчи «Гвардеец» колхоз	442
7.	Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	436
8.	Çӗрпӳ районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз	433
9.	Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	426
10.	Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз	384
11.	Пӑрачкав районӗнчи М. Горький ячӗпе тӑракан колхоз	375
12.	Ишлей районӗнчи «За коммунизм» колхоз	366
13.	Етӗрне районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз	358
14.	Вӑрнар районӗнчи Жданов ячӗпе тӑракан колхоз	351
15.	Улатӑр районӗнчи «Путь Ильича» колхоз	347
16.	Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз	337
17.	Çӗмӗрле районӗнчи «Комбинат» колхоз	336
18.	Шупашкар районӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз	320
19.	Çӗмӗрле районӗнчи «Знамя Ленина» колхоз	310
20.	Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз	310
21.	Елчӗк районӗнчи «Трактор» колхоз	302
22.	Çӗрпӳ районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	300
23.	Вӑрнар районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз	294
24.	Йӗпреç районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	287
25.	Чкаловски районӗнчи Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз	275
26.	Шупашкар районӗнчи «Красный флот» колхоз	269

Ӗне пӑхакансен ӑмӑртӑвӗ

Сӗт нумай суса илес ӗçре малта пыракансем

Кӑçалхи пӗрремӗш квартал итогӗсем

Йышӑннӑ вырӑн	Хушаматсем	Колхоз, район ячӗсем	Сӑвакан кашни ӗнерен сӗт сунӑ (литрпа)
1.	А. Е. ЕФИМОВА	Çӗрпӳри государство селекци станцийӗ	1.647
2.	А. Ф. ФЕДОРОВА	—»—	1.233
3.	О. П. ЛУКИНА	—»—	1.070
4.	О. М. МИТРОФАНОВА	—»—	1.037
5.	А. С. СЕЛИВАНОВА	Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхоз	772
6.	З. А. АНДРЕЕВА	—»—	773
7.	М. П. ПОРФИРЬЕВА	Вӑрнар районӗнчи Жданов ячӗпе тӑракан колхоз	720
8.	А. Н. ДУБЫНИНА	Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхоз	707
9.	М. Ф. ГАНЮШКИНА	Улатӑр районӗнчи «Победа» колхоз	645
10.	Н. И. КУЗОВЕНКОВА	—»—	633
11.	Л. Ф. ТАБАКОВА	Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз	630
12.	К. С. СИТУХИНА	Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	611
13.	М. М. ЩЕПЕТОВА	Етӗрне районӗнчи Маленков ячӗпе тӑракан колхоз	607
14.	О. А. ЛЕБЕДЕВА	Улатӑр районӗнчи «Победа» колхоз	605
15.	П. Е. ПОТАПОВА	Пӑрачкав районӗнчи М. Горький ячӗпе тӑракан колхоз	596
16.	А. Е. ФИЛИППОВА	Етӗрне районӗнчи Маленков ячӗпе тӑракан колхоз	581
17.	П. И. МУРАВЬЕВА	—»—	574
18.	З. Н. ИВАНОВА	Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз	570
19.	Н. П. БУРЛАКОВА	Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	567
20.	У. Н. МАТВЕЕВА	Етӗрне районӗнчи Маленков ячӗпе тӑракан колхоз	566
21.	Н. Д. СМИРНОВА	Улатӑрти махорка совхозӗ	559
22.	А. С. ТРОШКИНА	—»—	558
23.	М. К. СТЕПАНОВА	Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз	558
24.	Ю. Г. ВИКТОРОВА	—»—	553
25.	Н. Д. ЕРОШИНА	Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	553
26.	М. И. РУЗАВИНА	Улатӑрти махорка совхозӗ	537
27.	М. Т. ВАСИЛЬЕВА	Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз	535
28.	М. Г. БАРИНОВА	Етӗрне районӗнчи Маленков ячӗпе тӑракан колхоз	529
29.	Т. А. АНДРЕЕВА	Йӗпреç районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	529
30.	Т. С. РЫБАКОВА	Улатӑрти махорка совхозӗ	518
31.	Р. С. ПРОНИНА	—»—	506
32.	М. В. ОРЛОВА	Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	504
33.	П. В. ЗАПЛАТКИНА	Чкаловски районӗнчи «Гвардеец» колхоз	499
34.	А. П. ПЕТРОВА	Йӗпреç районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	493
35.	Р. Н. КИРИЛЛОВА	Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	487
36.	О. Н. ТОДИНОВА	—»—	484
37.	З. К. КИРИЛЛОВА	Çӗрпӳ районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз	482
38.	Н. Е. ПУГАЧЕВА	Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	480
39.	Е. И. ЧЕРМАКОВА	Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз	480
40.	Н. Н. ЖИРНОВА	—»—	473
41.	М. Я. КОЧЕТКОВА	Улатӑр районӗнчи «Путь Ильича» колхоз	473
42.	М. Ф. ПЛЕШКОВА	Чкаловски районӗнчи «Гвардеец» колхоз	471
43.	А. Т. МРАЗОВА	Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	467
44.	Н. Д. КУРБАТОВА	Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	457
45.	Т. Ф. ФИЛИППОВА	Çӗрпӳ районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз	449
46.	Е. К. КУЗЬМИНА	—»—	442
47.	У. В. ГАЛКИНА	Вӑрнар районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз	436
48.	П. О. ЛАПАЕВА	Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз	416
49.	А. Г. КАУЛИНА	Пӑрачкав районӗнчи М. Горький ячӗпе тӑракан колхоз	407
50.	Л. Ф. ХРАМОВА	Улатӑр районӗнчи «Путь Ильича» колхоз	406
51.	В. А. ЛЮБИМОВА	Ишлей районӗнчи «За коммунизм» колхоз	401
52.	В. Р. СПАСКИНА	Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	389
53.	Т. И. БРАТАНОВА	Етӗрне районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз	388
54.	А. Н. АЛЕКСАНДРОВА	—»—	387
55.	К. А. АРХИПОВА	Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Коммунизм» колхоз	382
56.	Т. А. СУРКОВА	Ишлей районӗнчи «За коммунизм» колхоз	379
57.	В. А. АНДРЕЕВА	Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз	379
58.	А. В. ВАСИЛЬЕВА	Вӑрнар районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз	378
59.	Е. Я. ПЫРКОВА	Çӗмӗрле районӗнчи «Комбинат» колхоз	377
60.	З. Е. ЕГОРОВА	Çӗрпӳ районӗнчи Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз	376
61.	М. А. АЛЕКСАНДРОВА	Çӗрпӳ районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхоз	371
62.	А. В. МАДЯРОВА	Çӗмӗрле районӗнчи «Комбинат» колхоз	370
63.	Н. Я. ЯКОВЛЕВА	Йӗпреç районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз	366
64.	В. А. БОГОМОЛОВА	Шупашкар районӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз	364
65.	З. В. ЯЗЫКОВА	Комсомольски районӗнчи «Родина» колхоз	358
66.	О. Я. ПЕТРОВА	Комсомольски районӗнчи «Красная звезда» колхоз	350

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Политикăлла комитетра

ЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). еральнăй Ассамблейăн Политикăлла итечĕ паян ирхи ларура гоминдан дисем агрессилле ĕçсем туни çинчен ма панă жалобăна сÿтсе явса пĕтернĕ. дии представителĕ Менон Бирма позине пĕтĕмĕшпех ырланă. Хаçатсем терчĕ тăрăх, икĕ кун каярах кăна минданăн çĕнĕ бандисем Бирмăна пырĕнĕ. Бирма çарĕсем гоминдан çарĕсе хирĕç наступлени тунине вăйсăрлатас на, халĕ пырса кĕнĕ бандăсем çĕнĕ нт тăвасшăн. Çак хыпар çинчен са, Менон гоминдановецсем «уççăн пĕр сăлтавсăр агресси тунине» сивĕ. Менон гоминдановец Цзян Тин-фу са каланă сăмаха хытă критикленĕ. и делегачĕ Ассамблейăна Бирма тăнă резолюци проектне йышăнма чĕннĕ.

н хыççăн Бирма делегачĕ У Мин н çапла каланă: агрессилле ĕçсемпĕн миндановецсем айăплă пулнине дисене хутшăнакансем пĕлеççĕ. Апла путе, тенĕ вăл малалла, хăшпĕр праельствăсем «агрессор аркатса, çаратса ернисем çине пăхмалла кухне куçĕ хупма» тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕ

Чан Кай-шипе тытакан çыхăнусене аспăн мар. Цзян Тин-фу Бирма чанщистсен ушкăнĕ çине «кÿршĕ çине нă пек мар» пăхнăшăн ÿпкелешнĕ. пирки У Мин Теин çакна палăртнă. Кай-ши Китай халăхĕн шанчăкне çунă хыççăн тата халăх ăна хăваласа ан, Бирма правительстви çакăн пек ох тÿрĕ: Китай халăхĕпе «кÿршĕ» пурăнас тесен, унăн законлă правиьствине йышăнас пулать. Юлашкин У Мин Теин çапла каланă: агрессора ăна хÿтĕлекенсене хирĕç тăма Бира пулăшу кирлĕ. Çав пулăшăва илейен, Бирмăн ĕмĕчĕ татăлнă пулĕччĕ.

Унтан комитет председателĕ Мунис ĕмĕшле дискусси пĕтни çинчен пĕлнĕ. Комитет Бирма, Мексика тата Артина тăратнă сĕнÿсен проекчĕсене са тухма тытăннă.

Мексика делегачĕ хăй тăратнă проект чен чарăнса тăнă. Вăл проекта малхинчен кăштах улăштарнă. Малтан ĕкра çапла каланă пулнă: Бирмăри ют çĕршыв çарĕсене хĕçпăшалсăрлатасси, унтан вара интернировать тăвасси е эвакуацилесси çинчен панă приказа пăхăнма «чĕнсе каламалла». Мексикăн хальхи проектĕнче çапла кăтартса панă: «çав ют çĕршыв çарĕсене малтан хĕçпăшалсăрлантармалла», ун хыççăн интернировать тăвассипе е эвакуацилессипе килĕшмелле.

Аргентинăпа Чили иккĕшĕ пĕрле Мексика проектне тÿрлетÿ кĕртме, çĕнĕ параграф хушса çырма сĕннĕ.

Перу делегачĕ Белаунде Мексика проектне, Аргентинăпа Чили сĕннĕ тÿрлетÿсене шута илсе, йышăнма чĕнсе каланă. Сивличчен малтан Генеральнăй Ассамблейăн ыйтăва йĕркелеме чĕнсе каламалла, тенĕ вăл. Египет делегачĕ те Мексика проектне ырланă.

Аргентина делегачĕ хăйĕн делегацийĕ тăратнă резолюци проектне каялла илнĕ.

Кăнтăр Африка Союзĕн тата Çĕнĕ Зеландипе Турци представителĕсем Мексика проектне, ăна тÿрлетсе çырма сĕннине ырланă.

Чан Кай-ши майлă тăракансем те гоминдановецсен агрессилле ĕçĕсене çирĕплетсе паракан фактсем илсе кăтартнине палăртса, Совет Союзĕн делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский çапла пĕлтернĕ: совет делегацийĕ Бирма тăратнă резолюцие пĕтĕмĕшпех ырлать. Вышинский çакна палăртнă: Мексика тăратнă резолюци проектĕнче чылай çитменлĕхсем пур, проекта кĕртме сĕннĕ тÿрлетÿре тата пысăкрах çитменлĕхсем пур.

Çакăн хыççăн Комитет ларăвĕ хупăннă.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Политикăлла комитет ĕнер ирхи ларура Бирма Союзĕн правительстви гоминдан бандисем Бирмăна хирĕç агрессилле ĕçсем тунă пирки панă жалоба тăрăх тăратнă резолюци проекчĕсене пăхса тухса пĕтернĕ.

Комитетăн ирхи ларăвĕнче СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский тухса каланă. Вăл Мексика резолюци проектне, уйрăмах Аргентинăпа Чили делегацийĕсем çак проект çумне хушса панă тÿрлетÿсене, вĕсем çителĕксĕр пулнине палăртса, критикленĕ. Çак резолюци проекчĕпе тÿрлетÿсенче гоминдан ушкăнне «Китай правительстви» тесе каланă, Бирма территорине пырса кĕнĕ гоминдан бандисене хĕçпăшалсăрлантарасси çинчен нимĕн те каламан.

Кăнтăрлахи ларура тухса каланă чылай государствăсен делегацийĕсем, вăл шутра Польша, Швеци, Ливан тата ытти государствăсен делегацийĕсем Вышинский юлташ сăмахĕ майлă пулса каланă.

Швеци представителĕ Аргентинăпа Чили делегацийĕсен тÿрлетĕвĕнче Тайвань утравĕ çинчи гоминдан ушкăнне «Китай правительстви» тесе каланине критикленĕ. Швеци правительстви, тенĕ вăл, Китайри законлă правительство тесе Китай Халăх Республикин Центральнăй правительствине кăна йышăнать. Вăл çавăн пекех тата çак тÿрлетÿре Бирма çине тапăннă гоминдан бандисене репатриаци тăвиччен хĕçпăшалсăрлантарма кирли çинчен нимĕн те каламаннине кăтартса панă.

Аргентинăпа Чили делегацийĕсем хăйсен тÿрлетĕвне çĕнĕрен пăхса тухнă, чылай делегацисем критиклесе каланă вырăнсене тÿрлетÿрен кăларса пăрахнă.

Ливан представителĕ Политикăлла комитетра пăхса тухма чылай тÿрлетÿсем тăратнă. Çаксем вĕсем Мексика резолюци проектне нумай лайăхлатнă. Çак тÿрлетÿсенче, сăмахран, гоминдан бандисем Бирмăна хирĕç тăшманла ĕçсем тунине сивлеме кирли çинчен каланă. Çакна хирĕç чылай делегатсем, уйрăммăн илсен, США-па Англи, çавăн пекех тата Латинла Америкăри хăшпĕр çĕршывсен делегачĕсем хирĕç тăнă пулсан та, Ливан делегацийĕн тÿрлетĕвĕсене йышăннă. СССР, УССР, БССР, Польша, Чехословаки делегацийĕсем Ази, араб çĕршывĕсен тата Латинла Америкăри хăшпĕр çĕршывсен делегацийĕсемпе пĕрле çак тÿрлетÿсене йышăнассишĕн сасăланă.

Çакăн хыççăн Мексика резолюцийĕн проектне сасăлама тăратнă. Çак резолюци проекчĕшĕн пурĕ 58 çĕршыв, вăл шутра СССР, УССР, БССР, Польша, Чехословаки делегацийĕсем сасăланă. Бирма тата гоминдановец нихăш майлă та сасăламан.

Пĕрлехи лару

ЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). н Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн еральнăй Ассамблейи «Пĕрлешнĕ нацисен командованине» Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнăшăн айăпланă оки пилĕк держава комиссийĕ «никам ллă пулмасăр тĕрĕслесе» тухасси çин теккен сĕнĕве йышăннă. Ку сĕнĕве рлешÿллĕ Штатсем тăратнă пулнă. к сĕнÿшĕн 51 çĕршыв делегацийĕ саланă, 5 çĕршыв делегацийĕ хирĕç нă, 4 çĕршыв делегацийĕ (Инди, Индонези, Бирма тата Саудовски Арави) хăш майлă та сасăламан.

Сасăлас умĕн США представителĕ осс совет делегацийĕ Пĕрлешÿллĕ Штат тăратнă сĕнĕве хирĕç пулнă пирки ланă.

Гроса хирĕç каласа, Вышинский çакна ăртнă: Гросс пурте пĕлекен фактсене сĕррĕн тунать пулсан та, «ООН командованийĕ» бактериллĕ хĕçпăшалпа усă рнине тĕнчери авторитетлă организасем тĕрĕслесе тухнă, фактсемпе çирĕплетсе панă. США çак ĕçе тÿрĕ кăмăлпа тĕрĕслесе тухма тăрăшмасть, тенĕ Вышинский. Çакăн çинчен США çак ыйтăва сÿтсе явас ĕçе хутшăнтарма Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин представителĕсене чĕнессине хирĕç пулни çирĕплетсе парать. Вышинский США сĕнĕвне хирĕçленĕ.

Ун хыççăн Генеральнăй Ассамблея Бирма правительстви Чан Кай-ши бандисем Бирмăна хирĕç агрессилле ĕçсем тунă пирки панă жалобăна пăхса тухма тытăннă. Бирма представителĕ У Мин Теин çапла ăнлантарса панă: Политикăлла комитетра çак ыйту пирки сасăланă чухне Бирма делегацийĕ, хăйĕн проекчĕ лайăхрах тесе, сасăламасăр тытăнса тăчĕ. Апла пулин те, Политикăлла комитетра сасăланă чухне пурте ырласа йышăннине шута илсе, халĕ Генеральнăй Ассамблейăра Политикăлла комитет сĕннĕ резолюци проекчĕшĕн сасăлать. Бирма, тенĕ У Мин Теин, «Пĕрлешнĕ Нацисем мораль тĕлĕшпе пысăк пулăшу панипе» тата ООН членĕсем пулăшнипе Бирма çак ыйтăва ăнăçлăн татса пама пултарассине шанать.

Çакăн хыççăн Ассамблея, пурте пĕр шухăшлă пулса, çак резолюцие йышăннă. Ку резолюцишĕн гоминдан ушкăнĕн представителĕ çеç сасăламан.

Сири представителĕ çапла каланă: çак сĕнĕве пĕр шухăшлă пулса йышăнни суверееннăй çĕршывсенчен мĕнпур ют çĕршыв çарĕсене илсе тухнипе çакнашкал ытти ыйтусене те татса пама пулăшма пултарать.

Ассамблея председателĕ Пирсон пулман пирки, Ассамблея председателĕн ĕçĕсене туса пыракан вице-председатель Джебб çапла пĕлтернĕ: çак лару хупăннă хыççăн Ассамблея хăйĕн ĕçне чарса лартать, вăл тепĕр хут Корейăра перемири тунă хыççăн е ООН членĕсен ытларахăшĕ ыйтнипе кăна пухăнать. Джебб Ассамблея Корейăра перемири тунă хыççăн мир туса хурассипе çыхăнса тăракан ыйтусене сÿтсе явма часах çĕнĕрен пухăнасса шанса тăни çинчен каланă.

Пĕтĕм Китайри хĕрарăмсен иккĕмĕш съезчĕ хупăннă

ПЕКИН, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Са кун хушши ĕçленĕ хыççăн, паян Пенра Пĕтĕм Китайри хĕрарăмсен иккĕп съезчĕ хупăннă. Съезд Китайри арăмсен движенийĕ çинчен Пĕтĕм Кири демократиллĕ хĕрарăмсен федерайĕн исполком председателĕн заместите Дэн Ин-чао отчетлă докладне тĕплĕн се явса çирĕплетнĕ. Съезд Пĕтĕм Кири демократиллĕ хĕрарăмсен федераци çинчен положени йышăннă, федеци исполкомне тата Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен конференцине кайма делегаци суйланă. Çавăн пекех тата çĕнĕ Китай тăвас ĕçе тата активлăрах хутшăнма Китайри пĕтĕм хĕрарăмсене чĕнсе каланине йышăннă.

Съезд делегачĕсем, тăвăллăн алă çупса, Мао Цзэ-дун патне, Китай халăх добровольцĕсем патне тата Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕн председателĕ Эжени Коттон патне саламлă телеграммăсем яма йышăннă.

БЕЛЬГИПЕ ГОЛЛАНДИРИ КАПИТАЛИСТСЕМ ХУШШИНЧИ КОНКУРЕНЦИ ВĂЙЛАННИ

БРЮССЕЛЬ, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Бельгире тухса тăракан хаçатсем Голландипе Бельги хушшинче конкуренци вăйланни çинчен пĕлтереççĕ.

Бельгири тир-сăран промышленность хуçисен федерацийĕ премьер-министр Ван Гутт патне çыру янă. Çырура вĕсем правительствăран Бельги тир-сăран промышленноçне Голланди конкуренцийĕнчен хÿтĕлеме, çĕршыва Голланди таварĕсене нумайăн кÿрсе пынине халех чарса лартма ыйтаççĕ.

Çыру çине 100 çынна яхăн алă пуснă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ апрелĕн 23-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 5 самолетне персе ÿкернĕ.

Корейăпа Китай делегацийĕ пĕлтерни

ПЕКИН, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăра перемири тăвас пирки каласусене хутшăнакан Корейăпа Китай делегацийĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Икĕ енĕн çыхăну ушкăнĕсен паян пулса иртнĕ саккăрмĕш ларăвĕнче Корейăпа Китай енĕ тепĕр енне çакăн çинчен пĕлтернĕ: Корейăпа Китай енĕ репатриацилекен тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисен шутне хальхи вăхăтра лагерьсенче тăракан çар çыннисемсĕр пуçне тата каласусем пынă вăхăтра Корейăпа Китай енĕ фронтра тыткăна илекен çар çыннисене те кĕртет. Çапла вара Корейăпа Китай енĕ тепĕр енне репатриаци йĕркипе пама палăртнă çар çыннисен шучĕ малтанхинчен нумайрах пулать. Корейăпа Китай енĕ тавăрса пама тивĕçлĕ тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисен шучĕ çинчен кирлĕ сведенисене тепĕр енне кунлен пĕлтерсе тăрать.

Паян Паньмыньчжоньра Корейăпа Китай енĕ тыткăнри 100 çынна репатриаци тунă, вăл шутра 75 кореец, 14 американец, 6 колумбиец тата 5 австралиец. Тепĕр енĕ Корея Халăх çарĕн тыткăна лекнĕ салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çын тавăрса панă.

Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн Исполнительнăй бюровĕн сессийĕ

ВЕНА, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 20-мĕшĕпе 22-мĕшĕ хушшинче Венăра Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн Исполнительнăй бюровĕн 22-мĕш сессийĕ пулса иртнĕ. Сессире Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне хатĕрлесси çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явнă.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне хатĕрленес тĕлĕшпе профсоюзсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Луи Сайян доклад тунă. Доклада сÿтсе явнă хыççăн Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн Исполнительнăй бюровĕ Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне Венăра 1953 çулхи октябрĕн 10—21-мĕшĕсенче çакăн пек кун йĕркипе ирттерме йышăннă:

1. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен ĕçĕсем çинчен тунă отчет тата пурнăça лайăхлатассишĕн, миршĕн пыракан кĕрешÿре ĕççыннисен пĕрлĕхне çирĕплетес тĕлĕшпе профсоюзсем умĕнче тăракан малашнехи залачăсем çинчен.
2. Ревизи комиссийĕн доклачĕ.
3. Экономикăлла тата социальнăй аталанушăн кĕрешес, капитализмла çĕршывсемпе колониллĕ çĕршывсен наци никама пăхăнманлăхĕпе демократилле прĕклĕхĕсене хÿтĕлес тĕлĕшпе профсоюзсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен.
4. Колониллĕ тата çурма колониллĕ çĕршывсенче профсоюз юхăмне вăйлатасси çинчен.
5. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн ертсе пыракан органĕсен суйлавĕ.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕн ĕçне мĕнпур çĕршывсенчи профсоюзсен центрĕсем, пĕр-пĕр отрасльри рабочисене пĕрлештерекен профсоюзсем, тĕнчери тĕрлĕ организацисене кĕрекен профсоюзсем хутшăнма пултараççĕ.

Исполнительнăй бюро Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресне пухасси çинчен Пĕтĕм тĕнчери арçыннисемпе хĕрарăмсене чĕнсе калани, Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене Корейăра вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси çинчен чĕнсе калани, çавăн пекех тата Пĕтĕм тĕнчери социальнăй страховани ыйтăвĕ тăрăх Вена хулинче 1953 çулхи март уйăхĕнче пулса иртнĕ конференци ĕçĕсем çинчен резолюци йышăннă.

Кунсăр пуçне, Исполнительнăй бюро Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн председателĕпе генеральнăй секретарьне Пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕ профсоюзсем текен конфедераци патне çыру яма хушнă. Çак организацие Пĕтĕм тĕнчери мире хÿтĕлес тĕлĕшпе, çавăн пекех ĕççыннисен экономикине тата социальнăй интересĕсене хÿтĕлес тĕлĕшпе тăракан мĕнпур ыйтусене тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе пуçару пама сĕннĕ.

Исполнительнăй бюро Пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕ профсоюзсен конфедерацине социальнăй страхованипе социальнăй обеспечени ĕçне хÿтĕлес, лайăхлатас тата вăйлатас тĕлĕшпе пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери конференци йышăннă, ООН-а ярса панă меморандум çумне хутшăнма, çав конференци социальнăй страховани тĕлĕшпе йышăннă программăна хÿтĕлеме чĕнсе каланă.

Исполнительнăй бюро хăйĕн 23-мĕш сессине кăçалхи август уйăхĕнче пухма йышăннă. Пĕтĕм Китайри профсоюзсен федерацийĕ сĕннĕ тăрăх, Исполнительнăй бюро Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн секретарĕ пулма Лю Чжан-шэн юлташа суйланă.

США-ра коммунистсене хĕсĕрлеççĕ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). США юстици министерстви пĕлтернĕ тăрăх, сăтăрла ĕçсем тунине тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен управлени пичетлесе кăларнă приказ вăй илнĕ хыççăн 30 кун иртиччен Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи Коммунистсен партине «хăйĕн тупăшĕсемпе расхочĕсем, членĕсем тата ытти ыйтусем çинчен калакан мĕнпур сведенисене» тăратма хушаççĕ.

Юстици министерстви кăтартса панă тăрăх, Коммунистсен партийĕн пĕр членĕ те суйласа лартман вырăнсенче ĕçлеме е государство службинче тăма тата оборона учрежденийĕсенче ĕçлеме пултараймасть. Парти членĕсем текех ют çĕршывсене тухса кайма паспорт ыйтса заявлени пама, хăйсен паспорчĕсен срокĕсене тăстарасси çинчен ыйтма е вĕсемпе усă курма пултараймаççĕ.

Юстици министерстви тата çакна палă тăвать: Маккарэн законĕ тăрăх, регистраци тăман организаци çине 10 пин доллар таран штраф хураççĕ. Закон тăрăх регистраци тăма тата регистраци тăрасси çинчен парти ячĕпе заявлени пама тивĕçлĕ çынсене, вĕсене айăплă тесе шутласан, 10 пин доллар таран штраф тÿлеттереççĕ, е пилĕк çуллăха хупса лартаççĕ, е штраф та тÿлеттереççĕ, тĕрмене те хупса лартаççĕ.

ПРОГРЕССИВЛĂ ХАÇАТ РЕДАКТОРНЕ АРЕСТЛЕНĔ

ПАРИЖ, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Коломбо хулинче (Цейлон) акăлчанла тухса тăракан «Пиплс Войс» хаçат редакторне Тамил К. Ванкунтхавасана арестлени паллă пулнă. Ăна Совет Союзĕнчен таврăннă хыççăн арестленĕ.

Украина халăхĕн чаплă писателĕ

(М. М. Коцюбинский вилнĕренпе 40 çул çитнĕ май)

Хĕрĕх çул ĕлĕкрех, 1913 çулхи апрен 25-мĕшĕнче, Чернигов хулинче Укаина халăхĕн чаплă писателĕ, революиллĕ демократĕ Михаил Михайлович оцюбинский вилнĕ.

Вăхăтсăр вилнĕ писательшĕн хурланса, рогрессивлă çынсен шухăш-кăмăлне паиртса, Алексей Максимович Горький пла çырнă: «Украина аслă çынна çутрĕ, вăл ăна унăн чаплă та мухтавлă ĕсемпĕн нумай çул хушши асăнса пунĕ, Çын вилĕмрен хăтăлаймасть, анчах халăх вилĕмсĕр. Украина халăхне аран пысăк салам».

Михаил Михайлович Коцюбинский 1864 лхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче Винница линче, чухăн пурăнакан служащи çемнче, çуралнă. Вăл ача чухнех халăн асаплă пурнăçне сăнама тытăннă. шĕне пĕрле çул çÿренĕ чухне çамрăк оцюбинский патша чиновникĕсемпе улутсем, кулаксем хресченсене пусмăрла, сывлама памасăр хĕсĕрлесе пурăннине рнă. Коцюбинский 17 çултах политилла ĕçе хутшăннă, çакăншăн ăна судпа айăпланă, вара ĕмĕрĕ иртиччен ун ççăн жандарисем сыхласа, йĕрлесе рăннă.

Ашшĕ-амăшĕ чухăн пурăннă пирки çамрăк Михаил шкулта виçĕ çул анчах вĕренме пултарнă. Кайран вара, пурнăçĕ çав тĕрлĕ йывăр пулнă пулин те, вăл хăй тĕллĕн вĕренсе учитель ятне илнĕ.

Идейăпа эстетика тĕлĕшĕнчен ÿссе, çирĕпленсе пыма çамрăк Коцюбинские революциллĕ демократсем — Белинский, Чернышевский, Добролюбов тата Салтыков-Щедрин çырнă произведенисем хытă пулăшнă.

Тарас Шевченкăн çулăмлă сăввисемпе юррисем, Марко Вовчок (Мария Маркевич) крепостла строя хирĕç çырнă калавсем Коцюбинские, хăй каланă тăрăх, чăнлăх çулĕ çине тăма пулăшаççĕ. Нумай вуласа, вĕренсе пынă хушăрах вăл халăх юрри-сăввисемпе, юмахĕсемпе тĕплĕн паллашать, вунтăхăр çулта калавсем çырма тытăнать.

1892—1897 çулсенче Коцюбинский, виноградниксене тĕрлĕ хурт-кăпшанкă ересрен сыхлакан комиссире ĕçленĕ май, Молдавипе Крымра нумай хуласемпе ялсенче пулать, пурнăça сăнать, калавĕсем валли материалсем пухать.

Коцюбинский Чернигов хулинче нумай вăхăт хушши пурăннă, кунта вăл «Фата Моргана» ятлă хăйĕн чаплă повеçне çырнă, Вăл хăйĕн произведенийĕсене пăсма, «якатма» хăтланакан патша цензорĕсемпе нимĕн хăрамасăр кĕрешнĕ, халăхран тухнă талантсене хÿтĕленĕ. Халăх писателĕн халăх телейĕшĕн, халăх ырлăхĕшĕн, çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешмелле, тесе каланă вăл.

1909 çулта Коцюбинский пурнăçĕнче паллă событи пулса иртет: Италире, Капри утравĕ çинче вăл вырăссен аслă писателĕпе—Алексей Максимович Горькипе паллашать, вĕсен хушшинче туслă çыхăну пуçланса каять.

Аслă Горький тăрăшнипе Коцюбинский çырнă калавсене вырăсла куçарса кăлараççĕ. Калавсен пĕрремĕш томĕ пичетленсе тухнă хыççăн Горький хăйĕн Украинăри тусĕ патне çапла çырнă: «Сирĕн кĕнекĕре эпĕ пĕтĕм чун-чĕререн савăнса, киленсе вуласа тухрăм». Чаплă вырăс писателĕ Украина писателĕн ĕçне çапла пысăк хак пани Коцюбинские питĕ хавхалантарнă, малашне те ăнăçлăн ĕçлеме пысăк вăй-хал панă.

Коцюбинский калавĕсенче эпир чухăн хресченсем çав тери асап, нуша тата хĕн-хур тÿссе пурăннине куратпăр. Акă «Этемлĕх ырлăхĕшĕн» ятлă калав. Зомфир Нерон молдаванăн çемйи хăйне майăн пĕр евĕрлĕ пурăнать, анчах та сасартăках телейсĕр кунсем килсе çитеççĕ: виноград пахчи çине хурт-кăпшанкăсем тапăнаççĕ. Яла патша правительстви янă ют çынсем килеççĕ. Вĕсем нумай шухăшласа тăмаççĕ, вĕсем хурт-кăпшанкăпа та кĕрешесшĕн мар,—вут чĕртеççĕ те виноград пахчине çунтарса пĕтереççĕ. Çемье çуклăха тăрса юлать. Нерон арăмĕ хуйхă пуснипе асапланса вилет, ватă ашшĕ ухмаха ерет. Писатель çак сценăсене тĕлĕнмелле хăватпа сăнласа панă. «Хурт-кăпшанкăсем» вĕсем—патша тарçисем, халăх ĕнси çинче пурăнакан сĕлĕхсем.

Писателĕн идейăлла вăй-хăвачĕ уйрăммăнах 1905 çулхи революци тапхăрĕнче пысăкланса çирĕпленет. «Кулăш» ятлă калавĕнче Коцюбинский либералсен суя маскине сирсе ывăтать. Чубинский адвокат халăх çинче, тĕрлĕ пухусенче этем ырлăхĕшĕн, телейĕшĕн хăлăçланса калаçать, хăй çав хушăрах Варвара ятлă служанкине хăй килĕнче йытта усранă пек усрать, мăшкăллать, çапать, хĕнет ăна. Халăх пансене хирĕç кĕрешĕве çĕкленет. Варвара «пансене хĕнеççĕ» тенине илтсен, калама çук савăнать, пĕтĕм чунтан хĕпĕртесе кулать. Горькипе калаçнă чух Коцюбинский: Варвара куллинче чун тарăхни, пысăк курайманлăх вĕресе тăрать, çав кулă вăл пурнăçра тата хăрушăрах, тесе каланă.

Писатель творчествинче «Фата Моргана» ятлă повесть паллă вырăн йышăнса тăрать. Автор Воликсен çемйи урлă чухăн хресченсем çĕршĕн тĕмсĕлсе пурăннине кăтартса парать, çав хушăрах ашкăнса, иртĕхсе пурăнакан харампыр улпутсен тискер сăнĕсене ÿкерет. Акса пурăнмалăх çĕршĕн çуннипе писатель уйрăммăнах Маланка Волик сăнарĕ урлă питĕ витĕмлĕ кăтартса панă. Хамăр ыррине курайманăмăр, ун вырăнне хăть Гафийка ятлă хĕрĕмĕр ыра куртăрччĕ, çĕрлĕ пултăрччĕ, пирĕн пек ан асаплантăрччĕ, тесе ĕмĕтленет вăл.

Повеçĕн иккĕмĕш пайĕнче хресченсем улпутсене хирĕç кĕрешме çĕкленеççĕ, вĕсен çĕрĕсене туртса илеççĕ. Хресченсене хуларан килнĕ Марко Гуща рабочи ертсе пырать. Çĕр туяннă хресченсем пĕрлешсе ĕçлеме ĕмĕтленеççĕ. Анчах та вĕсен савăнăçĕ нумая пыраймасть, хуларан карательнăй отряд килет, вăл хресченсен пăлхавне путарса лартать.

Коцюбинский повеçĕн виççĕмĕш пайне çырса ĕлкĕреймен, вăл унта класс кĕрешĕвĕ малалла ÿссе, вăйланса пынине, халăх хăйĕн пусмăрçисене яланлăхах çĕнтерессине, çутă та телейлĕ кунсем çитессине кăтартса парасшăн пулнă.

Михаил Михайлович Коцюбинскин произведенийĕсене пирĕн Тăван çĕршывра нумай чĕлхесем çине куçарнă, унăн кĕнекисем халăх хушшине нумай саланнă. «Фата Моргана» повесть чăвашла та пичетленсе тухнă. Юлашки вăхăтра унăн калавĕсемпе повеçĕсене халăх демократи çĕршывĕсенчи халăхсен чĕлхисем çине тата шведла, акăлчанла куçарса кăларнă.

Совет çыннисем чаплă украинец произведенийĕсене юратса вулаççĕ.

Ю. НАЗАРЕНКО.

Киев хули.

Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи суту-илÿ çинчен

СССР Шалти тата тулашри суту-илÿ министерствинче Польша суту-илÿ делегацийĕ хушшинче пынă каласусем ăнăçлă вĕçленнĕ. Кăçалхи апрелĕн 22-мĕшĕнче ССР Союзĕпе Польша Халăх Республики хушшинче 1953 çулта пĕр-пĕрне таварсем тăратасси çинчен Протокол çине алă пуснă.

Протокол кăçал, 1950 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче нумай вăхăтлăха йышăннă килĕшÿпе 1953 çул валли кăтартса панă тавар çаврăнăшĕ виçипе танлаштарсан, тавар çаврăнăшне чылай ÿстерме палăртать.

Совет Союзĕ Польшăна машинăсемпе оборудовани, çĕр мамăкĕ, тимĕр тăпри, марганецпа хром руди, нефтьпе нефть продукчĕсем, пăхăр, алюмини, хими таварĕсем тата Польша халăх хуçалăхне кирлĕ ытти таварсем тăратать.

Польша Совет Союзне тинĕс пăрахучĕсем, вагонсемпе пăравуссем, çĕр кăмрăкĕ, кокс, цинк, цемент, пир-авăр, сĕтел-пукан тата ытти таварсем тăрать.

Протокол çине Совет Союзĕ енчен—СССР Шалти тата тулашри суту-илÿ министрĕ А. И. Микоян, Польша енчен—Тулашри суту-илÿ министрĕ К. Домбровский алă пуснă.

Паха продукци

Юлашки вăхăтра Шупашкарти сăра заводĕнче пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Савăт-сапа çăвакан, кĕленчесене сăра тултаракан тата бутылкăсене пробкăпа питĕрекен полуавтоматсем туянса вырнаçтарнă, металран çĕнĕ чансем туса лартнă, чул стенасем тунă, хăшпĕр цехсене пысăклатнă. Çавна май заводăн хăвачĕ, 1941 çулхипе танлаштарсан, тăвата хут ÿснĕ. Завод икĕ тĕслĕ сăра, крем-сода тата ытти тутлă шывсем туса кăларать. РСФСР Çăмăл тата апатçимĕç промышленность министерствин дегустаци тăвакан комиссийĕ Шупашкарти сăра завочĕ лайăх продукци туса кăларнине палăртнă.

Завод продукци туса кăлармалли пĕрремĕш кварталти плана 118 процент тултарнă. Уяв ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, завод коллективĕ уйăхри плана срокчен тултарассишĕн, чĕртавара перекетлессишĕн кĕрешет.

АПАНАСОВ.

Вулакансен конференцийĕ

СОВЕТСКИ. Районти культура çуртĕнче вулакансен конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире пулнисем А. Фадеевăн «Çамрăк гварди», Н. А. Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» романĕсенчи геройсен сăнарĕсем çинчен докладсем итлерĕç. Ун хыççăн драма кружокĕн членĕсем «Çамрăк гварди» пьесăри уйрăм вырăнсене выляса кăтартрĕç.

В. ДИМИТРИЕВ.

Культурăллă пурнăç хроники

☆ **Кино-лекцисем.** Улатăрти чугун çул работникĕсен клубĕнче час-часах кино-лекцисем пулаççĕ. Çак кунсенче КПСС хула комитечĕн лекторĕсем Устимова, Ханкин, Пичугин юлташсем лекцисем вуласа панă. Лекцисем хыççăн «Юность Максима», «Возвращение Максима», «Выборгская сторона» кинокартинăсем кăтартнă.

Клуб правленийĕ техникăна наука ыйтăвĕсем тăрăх та кино-лекцисем ирттернĕ.

А. СМИРНОВ.

☆ **Семинар ирттернĕ.** Кÿкеçри культура çурчĕ ялсенчи культурăна çутĕç работникĕсен икĕ кунлăх семинарне ирттерчĕ. Семинар участникĕсем тĕнчери лару-тăру, малта пыракан совет литератури çинчен, культурăпа çутĕç учрежденийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен лекцисем итленĕ, библиотека ĕçне мĕнле йĕркелемеллипе паллашнă, çĕнĕ вăйăюрăсем вĕреннĕ.

К. ЧУГУНОВ.

☆ **Ĕççыннисен çуллахи канăвĕ.** Республикăри профсоюз организацийĕсем канмалли çуртсемпе санаторисене çĕнĕ сезона хатĕрлеççĕ. Кăçал Атăл леш енчи учительсен канмалли çуртĕнче тата Ильинкăра темиçе пин çын канмалла. Кувшинкăри канмалли çурт коллективĕ çĕнĕ сезона тăрăшса хатĕрленет. Кану çурчĕсемпе санаторисем майăн 20-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнаççĕ.

Н. МАЛЬЦЕВ.

Рыç тытнă

ПЕРВОМАЙСКИ. «Правда» колхоз утарĕнче пчеловод пулса ĕçлекен Т. Козлов юлташ пĕр каçхине пăшалпа персе икĕ рысь тытнă.

В. ТРОШКИН.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — апрелĕн 25-мĕшĕнче чăвашла спектакль **«ВИÇĔ ТУЙ».**

КИНО

«РОДИНА» — апрелĕн 25-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Новички на стадионе»**, 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Похищение».**
«УДАРНИК» — апрелĕн 25-мĕшĕнче **«Тревога».**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74; парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01365

Типография № 1 Чувашполиграфиздата.

Тираж 20.000 экз.